24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ФЕВРАЛЬ
15
ШАМАТКУН
38 (5753) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Паян Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлать

☆ ☆ ☆

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăласси çинчен

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференци делегачĕсене ЦК ВКП(б) çапла пĕлтерет: конференци февралĕн 15-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре Кремльти дворецăн Пысăк залĕнче уçăлать.

Совет халăхĕн мухтавлă çĕнтерĕвĕсем

Паян историллĕ чаплă кун. Мускава—социализмлă çĕршывăн мухтавлă столицинче—совет халăхне çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ патне илсе пыракан партин—Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партин вунсаккăрмĕш конференцийĕ уçăлать.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе социализмлă тăван çĕршывăн сăнăпачĕ палламалла мар улшăнчĕ. Экономика тата культура тĕлĕшĕнчен кая юлнă çĕршыв—вăйлă индустриллĕ, малта пыракан, пысăк ялхуçалăхлĕ, культурăллă çĕршыв, пуян та телейлĕ пурнăçлă çĕршыв пулса тăчĕ.

Партин XVIII съезчĕ пулнăранпа икĕ çул кăна çитет. Вăхăт нумай та иртмен. Анчах унтанпа тунă ĕçсем, социализмлă пурнăçăн çĕнтерĕвĕсем çавтери пархатарлă та пысăк. Совет Союзĕнче Союзлă республикăсен хисепĕ вунпĕртен вунултă çитрĕ. Капитализмлă çĕршывсен хĕсĕнме тиврĕ. Совет Союзĕн чиккисем Хĕвеланăç еннелле чылаях инçе куçса ларчĕç. Емĕр-емĕрсем хушши ĕмĕтленсе пурăннă тăван халăхсем—Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белорусси ĕççыннийĕсем халĕ ĕнтĕ Совет Союзĕн телейлĕ те ирĕклĕ халăхĕсемпе пĕрле. Историллĕ тĕрĕсмарлăха тӳрлетнĕ: Бессараби тата Çурçĕр Буковинăри халăхсем те Совет Союзĕн савăнăçлă çĕршывĕнче. СССР халăхĕсем пулăшнипе Балти тинĕсĕ хĕрринчи çĕршывсенчи—Литва, Латви тата Эстони халăхĕсем хăйсен ирĕклĕ пурнăçне яланлăх туянма пултарчĕç.

Лере — пирĕн чикĕсен лешъенче, Хĕвелтухăçĕнче те, Хĕвеланăçĕнче те, империализмлă иккĕмĕш вăрçă пушарĕ алхасать. Пушар çулăмĕ пĕр çĕршывран тепĕр çĕршыва куçса, сарăлса пырать. Мĕнчухлĕ халăх юнĕ тăкăнать, мĕнчухлĕ хуласемпе ялсем, культурăпа искусство пуянлăхĕсем ишĕлессĕ, мĕнчухлĕ ватă çынсем, ачапăчасем, хĕрарăмсем апат-çимĕççĕр, ăшă кĕтессĕр тăра-тăра юласçĕ. Çук унта савăнăç, çук унта ырă кун. Унта теттĕм каç хупăрласа илнĕ.

Коммунистсен партийĕ, ВКП(б) Центральный Комитечĕ, халăхсен çулăпуçĕ аслă гений Сталин ăста ертсе пынипе, совет правительстви мирлĕ политикăна çирĕп тытса пынипе, Совет Союзĕ çак вăрçă тулашĕнче тăрать, хăйĕн пурнăçне вĕçĕмсĕр лайăхлатса, экономика тата оборона хăватне ӳстерсе, вăйлатса тата тĕреклетсе пырать.

Пирĕн çĕршыв халĕ пит те паллă историллĕ тапхăрта пурăнать. Вăл тапхăр—классăр социализмлă общество туса çитерес тата социализмран майĕпен коммунизма куçса пырас тапхăр пулса тăрать. Вăрçăмĕш пятилетка çулĕсем—çак историллĕ аслă задачăна, тулли коммунизм патне куçас задачăна татса парассинче пит те палла, паха этапсенчен пĕри пулса тăраççĕ.

Пирĕн çĕршывăн экономикăллă задачисем калама çук пысăк. Сталин юлташ партин XVIII съездĕнче çапла каларĕ: «Эпир производство техникипе промышленность аталанăвĕн хăвăртлăхĕсем тĕлĕшпе капитализмлă чи пысăк çĕршывсенчен иртсе кайрăмăр. Ку питех те лайăх. Анчах ку сахал-ха. Вĕсенчен çавăн пекех экономика тĕлĕшпе те иртсе каймалла. Эпир ăна тума пултаратпăр, пирĕн ăна тумалла та. Экономика тĕлĕшĕнчен капитализмлă чи пысăк çĕршывсенчен иртсе кайсан кăна, пирĕн çĕршывра потреблени япалисем пĕтĕмпех çителĕклĕ пулĕç, пирĕн продуктсем ытлăн-çитлĕнех пулĕç, вара эпир коммунизмăн пĕрремĕш фазинчен унăн иккĕмĕш фазине куçма май илĕпĕр, тесе шанса тăма пултаратпăр».

Партин лартнă, аслă çулпуç лартнă задачăсене совет халăхĕ паттăрăн пурнăçласа пырать. Пирĕн промышленность та, транспорт та, ялхуçалăхĕ те пысăк утăмсемпе малалла аталанса пыраççĕ. Пирĕн çĕршывра кашни çул—пысăк çĕнтерӳсен çулĕ пулса тăрать. Иртнĕ çулта пирĕн çĕршыв, — партипе правительствăн юлашки вăхăтра кăларнă чаплă постановленисемпе, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче тата июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указсемпе хĕçпăшалланăскер; — хуçалăх çулне пур енĕпе те ăнăçлăн вĕçлерĕ. Паян эпир ĕнерхинчен аванрах ĕçлетпĕр, ыран—паянхинчен те мухтавлăрах ĕçленĕр: совет халăхĕн яланхи шухăш-кăмăлĕ çавăн пек.

Асăннă Указсем совет халăхĕн кулленхи пурнăçĕпе ăшлине кĕчĕç. Прогулсем чакса пыраççĕ, ĕç тухăçлăхĕ ӳсет, ĕç дисциплини çирĕпленет. Тунашлă ĕçлекен предприятисен хисепĕ куçеренех ăшпланать.

Пирĕн парти промышленноçпа транспортăн паянхи кунĕшĕн çеç мар, ыранхи кунĕшĕн те тăрăшать. Партипе правительство государствăн ĕç вăйĕсен резервисем çинчен йышăннă постановлени çавăн çинчен каласа парать.

Коммунистсен партипе совет правительстви ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç продуктисем ытларах та ытларах кăларассишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) кăçалхи январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановлени—партипе совет тата хуçалăх организацийĕсен аллине пысăк вăй пачĕ. Çак чаплă документсем пирĕн ĕççыннисене çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ.

Совет халăхĕ халĕ ĕççыннисен малта пыракан мухтавлă отрячĕ тавра — большевиксен партийĕ тавра, ВКП(б) Центральный Комитечĕ тавра, халăхсен юратнă çулпуçĕ Аслă Сталин тавра нихçанхинчен те тачă, çирĕп пĕтĕçнĕ. Пирĕн халăх хăйĕн тăван çĕршывне, Совет правительствине тата большевиксен партине чĕререн юратнине политикăллă тата производствăллă çĕкленĕве хăватлăн ӳстерсе пынипе ответлет.

Партин XVIII конференцине хатĕрленнĕ кунсем предприятисенче, транспортра та, колхозсемпе совхозсенче те ĕç хастарлăхĕ вăйлăн ӳссе пынипе палла пулса тăчĕç. Партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пынă социализмлă амарту Совет Союзĕн пур кĕтесĕсенче те питĕ те анлăн сарăлса пычĕ. Ытти крайсемпе республикăсенчи ĕççыннисемпе пĕрлех, пирĕн республикăри ĕççыннисем те конференцине паха парнесемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешрĕç.

Пирĕн республикăри промышленность январь уйăхĕнче чылай пысăк çитĕнӳсем турĕ. Промышленность, иртнĕ çулхи январь уйăхĕпе танлаштарсан, кăçалхи январь уйăхĕнче 29,3 процент ытларах продукци туса кăларчĕ. Улатăрти паровозсем юсакан завод, Канашри вагонсем юсакан завод, Куславкка комбиначĕ, Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь т. ыт. паллă предприятисем те иртнĕ уйăх планĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕç. Союзлă республикăна пăхăнса тăракан предприятисем иртнĕ уйăх планне 112,5 процент таран тултарчĕç.

Çĕмĕрлери древкомбинатра 1917 çын ăмăртса ĕçленĕ. Çавна май комбинат январьри плана 114,3 процент тултарчĕ. Ĕç укçи фондне вĕсем 106,6 пин тенкĕлĕх перекетлесе хăварнă. Продукци пахалăхне те нумай лайăхлатнă. Кунта туса кăларнă 100 пукантан 99 пукан—чи лайăх, пĕрремĕш сортлисем.

Республикăри вырăнти промышленность та уйăх планне тултарчĕ. Тултарчĕ çеç те мар, ытлашшипех пурнăçланă. Промысла союзĕн артелĕсем нумайĕшĕ социализмлă ăмăртура мала тухрĕç. Республикăри пысăк артельсенчен пĕри—Канашри «Красный воин» артель партин XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле икĕ уйăх планне çеç мар, пĕтĕм квартал планне ытлашшипех тултарчĕ. Çавăн пекех Елчĕк районĕнчи Полина Осипенко ячĕпе тăракан артель те кăçалхи пĕрремĕш квартал планне 110 процент таран тултарнă. Февраль уйăхĕ пĕтнĕ çĕре вĕсем пĕрремĕш квартал планне 300 процент тултарма ĕмĕтленеççĕ.

Конференцине чугунçул работникĕсем те паха ĕççемпе кĕтсе илчĕç. Канаш станцийĕ таварсем тиес плана январь уйăхĕнче пĕтĕмпех тултарнă. Февраль уйăхĕн вунăкунлăх планне те ăнăçлăн пурнăçларĕç. Поездсен составителĕ «Сталинский призыв значокне» илнĕ Ч. Ананьев хăйĕн план-заданине 138 процент таран тултарса пырать. А. Николаев (Канаш), Блябин, Козлов, Зульфин (Улатăр), Подуздников, Шуранов, Дукунин (Çĕмĕрле) юлташсем—пирĕн республикăри чугунçул çынчи паллă çынсем пулса тăраççĕ. Стахановецсен, производствăра малта пыракан çынсен чаплă çĕнтерĕвĕсем—парти конференцине хатĕрленнĕ май тунă паха парнесем пулса тăраççĕ.

Пĕтĕм çĕршыв партин конференцине чаплă çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕ. Вăл çитĕнӳсем пĕтĕм халăха татах та пысăкрах утăмсемпе утма, çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тума хавхалантараççĕ.

Партин XVIII конференцийĕ промышленноçпа транспорт ĕçĕсене малалла хăватлăн аталантарса пыма пысăк программа парса хăварĕ. Конференци решенийĕсене, çĕршыв умне лартнă задачăсене совет халăхĕ, яланхи пекех хăйĕн тăван ĕçĕ выранне хурса, вĕсене пурнăçа кĕртме пĕтĕм вăй-халпа, пĕтĕм пултарулăхпа, хастарлăхпа тытăнĕ.

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен Партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен юратнă тусĕ, Аслă çулпуç Сталин юлташ!

Февралĕн 16-мĕш— УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КУНĔ

Суйлавсем умĕн

СĔНТĔР. Суйлав кунĕ çывхарса çитнĕ май агитациллĕ ĕç те вăйланса пырать. Пашалукассинчи агитколлектив суйлав умĕнхи агитаци ĕçне анлăн сарса ячĕ. Агитаторсем Сталинла Конституци, суйлав Положенийĕ, суйлав техники, И. М. Чарыков юлташăн пурнăçне ĕçĕсем çинчен кашни суйлавçăна каласа параççĕ. Кашни агитатора 10 кил çумне çирĕплетнĕ. Суйлавçăсем пурте коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕ тăратнă И. М. Чарыков юлташăн сасăлама пуласçĕ.

Агитаторсем агитаци ĕçне çуракине хатĕрленес ĕçпе сыхăнтарса туса пыраççĕ. «Красный Октябрь» колхоз çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Ялхуçалăх машинисене юсанă, вăрлăхсене кирлĕ таран сортласа хунă, хĕллехи агротехникăллă мероприятисене пурнăçа кĕртнĕ.

ЕМЕЛЬЯНОВ.

КУСЛАВККА, февралĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Çăкалăхра 16 агитатор ĕçлет. Вĕсем 499-мĕш номерлĕ Вăрмар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă район Советне депутата суйлама тăратнă Я. Никитин юлташсемшĕн агитацилеççĕ.

Агитаторсем куллен йĕркеллĕ ĕçлесе пыни умра тăракан ĕçсене вăйлатрĕ. Нумай колхозниксем 1941 çулти государство умĕнчи хăйсен обязательствисене тултараççĕ. М. Никитин, Т. Скворцов, С. Тимофеев, Н. Миронов, Корнилова, Ефимов тата ытти чылай колхозниксем 1941 çулти самообложени, культсбор тата заем укçисене тӳлесе татрĕç.

Агитаторсем тăрăшса ĕçленине пула Аманикре вĕçĕ единоличник хуçалăхĕ колхоза кĕнĕ.

Суйлава мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслесе тухрăмăр

ВĂРМАР, февралĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Февралĕн 13—14-мĕшсенче райсовет исполкомĕпе парти райкомĕн членĕсем суйлав участокĕсем суйлава мĕнле хатĕрленсе пынине тĕрĕслесе тухрĕç. Суйлав пулмалли çуртсем, кабинăсем тата ытти хатĕрсем те ситĕлĕклĕ. Суйлавçăсем суйлав кунĕ хăçан пулассине, камшăн сасăламаллине тата сасăлас техникăна аван пĕлсе тăрассĕ.

Кӳлкеш, Тансарина тата ытти суйлав участокĕсенче ватă суйлавçăсене сасăлама илсе пыма, çавăн пекех леçсе хăварма чи лайăх лашасем уйăрнă.

Суйлав кунĕ çывхарса килнĕ май, агитаторсемпе доверенăйсем килĕрен çӳресе суйлавçăсене 499-мĕш номерлĕ Вăрмар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатăн С. Е. Белолипецкий юлташăн биографийĕпе тепĕр хут паллаштараççĕ, сасăлас техника çинчен калаçа парассĕ.

Чупай, Шăпалат ялсовечĕсенче суйлавçăсен списокĕсенче халĕ те йăнăшсем пуррине палăртнă. Çав йăнăшсене тӳрлетме районран пулăшу янă.

Суйлав кунĕнче кашни суйлав участокĕнче буфетсем пулаççĕ.

А. СМИРНОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Агитаторсем участокра

Наркомфинри агитколлектив 11-мĕш номерлĕ суйлав участокĕнче суйлав умĕнчи агитаци ĕçне питĕ лайăх туса пырать. Агитаторсем хăйсене çирĕплетнĕ çуртсенче пурăнакан суйлавçăсем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне куллен туса пыраççĕ. Суйлав кампанийĕ пуçланнă хыççăн агитаторсем суйлавçăсем хушшинче тĕрлĕ ыйтусем тăрăх 24 каласу /туса ирттернĕ. Агитаторсем пуçарнине çамрăксене, стариксене, хĕрарăмсене пухса пухусем туса ирттернĕ, пухусенче Сталинла Конституци çинчен доклад тунă, И. М. Чарыков юлташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă.

А. Андреева, А. Ланцков, В. Еремкин, Скворцов агитаторсем уйрăмах лайăх ĕçленине палăртмалла. Вĕсем 1937 çултанпа агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Суйлавçăсем вĕсем туса паракан докладсене, каласусене юратса итлеççĕ. Февралĕн 13-мĕшĕнче Скворцов агитатор пуçарнипе килхуçи хĕрарăмĕсен пухуне туса ирттернĕ, унта килти гигиена çинчен врач доклад туса панă.

Агитколлектив ĕçлекен участокри суйлавçăсем суйлавсене çĕр проценчĕпех хутшăнасса шанма пулать.

Паха парне

Шупашкарти пединститутри преподавательсемпе студентсем XVIII партконференцине «Научные записки» ятлă сборнике пичете пама хатĕрлесе сӳннине кĕтсе илчĕç. Институтăн вăтă çулхи пурнăçĕнче ку пĕрремĕш сборник пулса тăрать. Сборникре институтри преподавательсен, доцентсен тата икĕ студент ĕçĕсем пичетленмелле.

А. Терентьев.

Республикăри ĕççыннисем XVIII партконференцине производствăри çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ

Тунă çитĕнӳсемпе лăпланмастпăр

ВКП(б) Центральный Комитечĕ партин XVIII конференцине пухасси çинчен пĕлтерни ĕççыннисен производствăллă тата политикăллă активлăхне вăйлăн çĕклерĕ. Пирĕн депори рабочисемпе служащисем, инженерно-технически работниксем конференци умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, тухăçлăн ĕçлеме, çитĕнӳсем тума сăмах пачĕç.

Конференци умĕнхи ăмăртун малтанхи итогĕсем пирĕн коллектив хăй çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыни çинчен каласçĕ. Хĕллехи вăхăт чугунçул работникĕсемшĕн ответлă тапхăр пулса тăрать. Кăçал уйрăмăнах çанталăк сивĕ тăни, юр нумай çуни пирĕн ĕçе чылаях чăрмавсем кӳрет. Апла пулин те депори машинистсенчен нумайĕшĕсем ялан стахановла ĕçлеççĕ. Машинистсем: Назаров, Романов, Яковлев, Байдулов, Чупаев тата ытти ытларах юлташсем йывăр составлă поездсем илсе сӳреççĕ, технически хăвăртлăха ирттерсе тултараççĕ. Çавăнпа пĕрлех топливо перекетлеççĕ.

Малта пыракан машинистсем Лунин меточĕпе ĕçлесе паровозсен ремонтра пулас срокне кĕскетеççĕ. Аваристр ĕçленĕшĕн депори 22 машинист нарком наградине илме тивĕçлĕ пулчĕç. Февралĕн 5-мĕшне 100 машиниста хисеп кĕнеки çине кĕртнĕ.

Депора ĕçлекенсен те ĕç тухăçлăхĕ пысăк. Январьти плана арматурщиксем 144 процент, токарьсем — 243 процент, автоматчиксем — 152 процент, котельщиксем — 144 процент тултарнă. Февраль уйăхĕнче те вĕсем хăйсен ĕç хăвăртлăхĕсене чакармаççĕ, ӳстерсе пыраççĕ. Токарь-стахановец Тарасов юлташ нормăна 335 процент, слесарьсем Романовпа Абросимов юлташсем 209 процент тултараççĕ.

Депо коллективĕ январь уйăхĕнче кăна 55.000 тенкĕ перекетлерĕ.

Депо коллективне килхуçи хĕрарăмĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Вĕсем кĕске вăхăтрах чугунçул çинче сапаланса выртакан металсене 4 тонна пуçтарнă. Кирлĕ пулсан лини çинчен юр тасатас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Юлашки вăхăтра ăмăртура малта пыракансен опытне сарас, брак, простой тăвакансене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ĕççем лайăхланчĕç. Стахановецсен паха ĕçĕсем çинчен стена хаçатĕнче сыпнă, учет хăми çинче кăтартнă. Ăмăрту итогĕсене кашни вунă кунта производствăллă канашлура сӳтсе-явнă. Нумай пулмасть Тимофеев, Конев, Юрковский машинистсен ĕçĕнче брак пулнă. Вĕсем çинчен канашлусенче сӳтсе-явнă.

Партин XVIII конференцинче промышленноçпа транспорт ĕçĕсем çинчен сӳтсе-явмалла. Конференци вăл .ыйтусем тăрăх паллă решенисем йышăнĕ. Эпир тунă çитĕнӳсемпе лăпланмасăр хамăр ĕçе татах та лайăхлатмăр, конференци решенийĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртме сăмах паратпăр.

В. ПРОКОФЬЕВ.
Канашри депо начальникĕ.

Обязательствăсене пурнăçа кĕртрĕç

ÇĔРПУ. Малта пыракан предприятисем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç. Районри апат-çимĕç комбинатĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕ конференци уçăлнă тĕле уйăх çурăри плана 120 процент тултарма обязательство илнĕччĕ. Коллектив çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ. Пĕрремĕш кварталти плана 62 процент, уйăх çурăри плана 125 процент ытла тултарнă.

Профшкулта вĕренекенсемпе мастер-преподавательсем тата рабочисемпе служащисем те хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртрĕç. Кварталти плана ытлашшипех тултарнă. Ĕç тухăçлăхĕ чылаях хăпарнă. Сăмахран, тĕрĕ тĕрлекен цехри 43 çын пурте кулленхи плана ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Çакна май цех пĕрремĕш кварталти плана 136 процент тултарнă.

Т. МАЙОРОВ.

ИШЛЕЙ, февралĕн 14-мĕш. (Телефонпа). Чурачăкри промартель XVIII партконференци ячĕпе хăйĕн çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçларĕ. Артель январь уйăхĕнчи производство планне 160 процент тултарнă. Куллен кирлĕ таварсем: ашăксем, вĕренсем, сумкăсем туса кăларма тытăнчĕ.

Чурачăк ялсовечĕ пĕрремĕш кварталти финанс планне 100 процент ытла тултарнă. Финанс планне тултарас енĕпе ялти активистсем тăрăшса ĕçлерĕç.

С. ГОРЛАНОВ.

Пищевиксен çитĕнĕвĕ

Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн предприятийĕсем партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртура пысăк çитĕнӳсем турĕç. Вĕсенчен чылайăшĕ январь уйăхĕнчи тата февралĕн пирвайхи вунăкунлăхри планне ытлашшипех тултарчĕç.

Шупашкарти макарон фабрики январь уйăхĕнчи плана 102,8 процент, «Мельтрест» системинчи механизацине армансем — 100,3 процент тултарнă. Канашри аш-какай комбиначĕ январь уйăхĕнчи плана 142,9 процент, февраль уйăхĕнчи пĕрремĕш вунăкунлăх планне 130 процент тултарнă.

Районри предприятисем (вĕсем пĕтĕмпе 18 предприяти) январь уйăхĕнчи производствăллă программăна 136 процент тултарчĕç. Уйрăмăнах Çĕмĕрлери квас завочĕ тата кондитерски изделисен фабрики, Элĕкри райпищекомбинат, Канашри кондитерски фабрика лайăх ĕçлерĕç. Сăмахран, Çĕрпӳри райпищекомбинат коллективĕ партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса уйăх çурăри плана 120 процентран кая мар тултарма обязательство илнĕччĕ. Çак обязательствăна коллектив ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ. Комбинат квартал планне 62 процент, уйăх çурăри плана 125 процент тултарчĕ.

Анчах хăшпĕр предприятисем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртеймерĕç. Етĕрнери çу завочĕ питех те начар ĕçлет-ха. Вăл январь уйăхĕнче хăйĕн производствăллă программине 72 процент çеç тултарчĕ. Техжирпромăн предприятийĕсем те ăнăçлăн ĕçлесе пыраймарĕç, вĕсем плана 40,6 процент кăна тултарчĕç.

Калас пулать, кая юлнă предприятисен руководителĕсем социализмлă ăмăртупа стахановла движенине пуçарса пымарĕç.

Апат-çимĕç промышленноçĕн çитĕнĕвĕсем куллен кунах ӳссе пымалла. Кая юлнă предприятисен çитес кунсенчех малта пыракан предприятисен ретне тăмалла. Партконференци умĕн сарăлса кайнă ăмăртăва малашне те вăйлатнăçемĕн вăйлатса пымалла, пĕрремĕш кварталти плана пысăк пахалăхпа тата срокчен тултармалла.

Г. КРЮЧКОВ,
Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссарĕ.

Пирĕн çĕнтерӳсем

ÇĔМĔРЛЕ. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине хатĕрленнĕ май пирĕн комбинатра социализмлă ăмăртупа стахановла движени анлăн сарăлса кайрĕç. Комбинатра пĕтĕмпе 1917 çын пĕр-пĕринне ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен кашниех хăй çине конкретлă обязательствăсем илнĕ.

Комбинат январь уйăхĕнчи плана 114,3 процент тултарчĕ, кунпа пĕрлех ĕçукçи фондне 106,6 пин тенкĕлĕх перекетленĕ. Комбинат туса кăларакан продукцин пахалăхĕ нумай лайăхланчĕ. Январь уйăхĕнче туса кăларнă мĕнпур пукансенчен 98,8 проценчĕ пĕрремĕш сортлисем.

Уйрăм рабочисем чăннипех стахановла ĕçлесе хăйсен кулленхи производствăллă нормисене ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешетпĕр.

В. МУХИН.
Партбюро секретарĕ.
А. КУСАКИН.
Планпа производство отделĕн начальникĕ.

* *

Çĕмĕрлери древкомбинатăн 3-мĕш номерлĕ цехĕнчи рабочисемпе инженерно-технически работниксем хушшинче Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партийĕн XVIII конференцийĕ ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Коллектив январь уйăхĕнчи плана 125 процент ытла тултарчĕ. Ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса ĕçлекен Канавичьев, Веселкин, Кобанин, Белов, Краснощеков, Щиглер, Гнецков стахановецсем уйăхри заданисене 236 процент таран тултарчĕç.

МИЛОРАДОВСКИЙ.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине çитĕнӳсемпе кĕтсе илетпĕр

☆ ☆ ☆

Ылттăн алăсем

Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи стахановец Николай Васильевич Калентьев юлташ, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, сменăри нормăна 120—137 процент тултарса пыма пуçланă. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Н. В. Калентьев юлташ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Ăмăртура малта пыракансем

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Чугунçул станцин коллективĕ çула йĕркеллĕ тытса тăрассишĕн, поездсене вăхăтра çӳретессишĕн тата грузсем тиесе пушатмалли плана срокчен тултарса пырассишĕн вăя хурса çĕлет. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах стахановецсемпе ударниксем паха пример кăтартаççĕ. Вĕсене коллектив аван пĕлет, ялăнах асра тытать. Вĕсен примерĕпе сахал мар рабочисем тухăçлăн ĕçлеме вĕренсе пыраççĕ.

Акă, Зубавинпа Бежаев юлташсем. Вĕсем иккĕшĕ те станцинче дежурнăйсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсен ĕçĕнче нихăçан та простой, авари пулман, кашни поезда вăхăтра кĕтсе илсе, вăхăтра ăсатаççĕ. Поездсем çӳретмелли графика йĕркеллĕн пурнăçлаççĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн Зубавин юлташа иртнĕ çулта СССР Çулйĕр Халăх Комиссарĕ хаклă премипе панă.

Старший стрелочник Бочков юлташ та иртнĕ çулта Нарком премине илме пултарчĕ. Вăл стрелка хуçалăхне отлично тытать, пĕр аварисĕр ĕçлет.

Брюхановпа Подуздиков юлташсем те социализмлă ăмăртура паха результатсем кăтартаççĕ. Иккĕшĕ те составитель пулса ĕçлеççĕ, стахановецсем. Январь уйăх планне Брюханов юлташ 124 процент, Подуздиков юлташ 135 процент тултарнă. Февральте татах та лайăхрах результатсем кăтартаççĕ.

Çĕршывра Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе социализмлă ăмăрту пуçланса кайсан, Çĕмĕрле станцинче ĕçлекенсем çав ăмăртăва хутшăнса татăклă обязательствăсем илнĕччĕ. Коллектив илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртсе пырать. Январь уйăхĕнче вăл грузсем пушатас плана ытлашшипех тултарнă, простойсем пулассине чакарнă, грузсем тиес енĕпе кăна вагонсем паман пирки плана кăштах тултарайман. Ку уйăхра ăна та ытлашшипех тултарасса шанаççĕ. Коллективра стахановецсемпе ударниксен хисепĕ 60 процент ытла.

Тимĕрçсен ăмăртăвĕ

Тимĕрç Сергей Бочкарев юлташ пĕрехинче пĕтĕм цеха тĕлĕнтерчĕ.

— Бочкарев 150 кронштейн тунă, — тĕлĕнсе каласаççĕ цехри тимĕрçсем.

Мĕншĕн-ха Бочкарев юлташ 150 кронштейн тунинчен тĕлĕнеççĕ, рекордлă ӳсĕм-и мĕн вăл? Çапла, Бочкарев юлташ цехри Глупов, Михайлов юлташсенчен нормăна икĕ хут ытларах тултарнă. Çакă вара Глуповпа Михайлова питĕ хускатнă. Вĕсем кирек мĕнле пулсан та Бочкаревран иртсе каяспăн пулнă. Глупов юлташ ăна хуса çитеймерĕ. Çав вăхăтрах Михайлов Бочкарева хуса çитме пултарнă. Çакăн хыççăн цехри чылай тимĕрçсем хăйсен пултарулăхне тата вăйне виççе пăхма шут тытрĕç.

Цехра çĕнĕ хыпар сарăлчĕ:

— Гордеев юлташ 180 кронштейн авнă...

— Эпĕ Гордеев юлташа куратăп, ăна мала тухнăшăн тав тăватăп.

— Василий Александрович мана, — каласа парать Гордеев, — эсĕ 30 кронштейн та тăваймастăн терĕ. Халĕ вăл та иккĕленме пултараймĕ.

Тимĕрç цехĕнчи старший мастер. **Ив. МОСЕЕВ.**

Элĕк районĕ, партин XVI съездчĕ ячĕпе тăракан колхоз.

Колхоз председателĕпе колхоз счетоводчĕ—М. Ф. Федоровпа С. И. Илларионов юлташсем иккĕшĕ пĕрле партин XVIII конференцийĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртсе çитернине итог тума тытăнчĕç. Вăл обязательствăсенче паллăрах пунктсем çаксем пулнă: партконференци уçăлнă тĕле çуракине хатĕрленсе çитесси, вăйлă тырпул туса илес щутпа кирлĕ таран удобренисем хатĕрлесси тата агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене пурнăçа кĕртесси.

Вĕсем колхоз кладовщикне чĕнсе илсе, вăрлăхсене кайса пăхса килчĕç. Амбарсене юр кĕмен-и, вăрлăхсем мĕнле сыхланса выртаççĕ—яланах тĕрĕслесе тăни кирлĕ, унсăрăн вăрлăхсем пăсăлма пултараççĕ. Колхозăн акма таса вăрлăх хатĕрех, пĕтĕмпех сортласа хунă, вĕсене вăрлăх лабораторинне тĕрĕлеттерсе килнĕ. Унта сĕлĕ 94 проц., çурхи тулă 98 проц., хантăрвăрри 92 процент шăтма пултарнине палăртнă. Вăрлăхсем кондиципе те лараççĕ. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхозăн «Диппе» сортлă сĕлĕ 5 центнер улăштарса килнĕ. Çуракинче усă курма мĕн çителĕклĕ, вĕсене çĕнĕрен çĕленĕ, киввисене сапласа çуса хунă.

Ялхуçалăх машинисене те йăлтах юсаса лартнă. Кӳлмелли хатĕрсем пурте пекех çĕнĕ, вĕсене кашни лаша пуçне икшер комплект илсе хатĕрленĕ. Хăмăтсем, ĕнерчĕксем, тилхепесем, йĕвенсем, тевĕшсем, турта пăявĕсемпе урхалăхсем пурте складра тирпейлĕ çĕрте тăраççĕ.

Михаил Федорович аллинче—партконференци ячĕпе пыракан ăмăртура уйрăмах мала тухнă колхозниксен списокĕ. Федор Семкин 1940 çулта 455 ĕçкунĕ тунă, кăçал 500 ĕçкунĕ тума обязательство илнĕ. Унăн ĕнтĕ халех 100 ĕçкунне сывхарать. Ольга Кириллова 250 ĕçкунĕ тума пуçлă пулсан, ку тариччен 70 ĕçкунĕнчен ирттернĕ.

Стахановецсен пархатарлă ĕçĕсем куç умĕнчех. Вĕсен ылттăн аллисем колхоза ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле çуракине хатĕрленсе çитме, хĕллехи агротехникăллă мероприятисене пурнăçа кĕртме пулăшрĕç. Александра Салтыкова, Евдокия Самойлова, Ефим Титов тата колхозăн хăйсен чунĕсене парса ĕç лекен ытти колхозниксем бригадир паракан нимĕнле нарядран та пăрăнса гăмаççĕ. Алла ĕç пултăр тата вăл пурнăçа юсама, колхозăн общественнăллă хуçалăхне тĕреклетме пултартăр. Вара вĕсем вăл ĕçшĕн каççах каяççĕ тата ăна хăйсем пуçарса пыраççĕ.

Колхоз счетовочĕ С. И. Илларионов юлташ тĕрлĕ хутсем çинчен тĕрлĕ цифрăсем пухса, пĕтĕмĕшле итог туса цĕтерчĕ. Ку итогсем колхоз агротехникăллă мероприятисене мĕнле пурнăçа кĕртнине кăтартса параççĕ. Акă вăл итог: уя 2.000 лав тислĕк кăларса, ăна лайăхрах çĕрме пысăк купасем туса лартнă. Кĕл 50 центнер, кайăкçĕшĕк тислĕкĕ 20 центнер пухнă. Минераллă удобренисем 10 тонна кӳрсе килнĕ, 165 лав юшкăн кăларнă. 160 гектар çинче юр тытнă. Юр тытма 460 щит кăларса лартнă, вĕсене ку вăхăтчен икĕ вырăна куçарнă.

Колхозра ĕç дисциплини çирĕпленсе пырать. Çавна май ĕç тухăçлăхĕ те хăпарни сисĕнет. Нумайĕш колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем те XVIII партконференци уçăлнă тĕле хăйсем тунă çĕнтĕ ĕçсен итогĕсем çине пăхса савăнаççĕ.

Каç-каç колхозниксем канцелярине тухăнса агротехника правилисене тата малта пыракан колхозсен паха опычĕсене вĕренеççĕ. Хаçатсем çинче Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз çинчен калакан материалсене тата Коротков юлташ Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн научнăй советĕнче тунă доклада колхозниксем агрокружок занятийĕсенче тĕплĕн сӳтсе-явса вĕренеççĕ.

Колхоз кăçал гектар пуçне 17 центнер тĕштирĕ туса илессишĕн кĕрешет. Вăл кĕрешĕвĕн малтанхи результачĕсем пур.

Колхоз председателĕ М. Ф. Федоров юлташ умра тăракан задачăсем çинчен калать: партконференци ячĕпе сарăлса кайнă социализмлă ăмăртăва малаллана та вăйлатса пымалла, колхозăн общественнăллă хуçалăхне сарса тĕрĕслетсе пымалла, единоличниксене тĕрĕс çул çине тăма—колхоза кĕме пулăшмалла.

Çак кунсенче колхоза виçĕ хуçалăх хутшăнчĕç те ĕнтĕ.

Ив. МОСЕЕВ.

(«Чăваш Коммуни» корр.).

Элĕк районĕ, партин XVI съездчĕ ячĕпе тăракан колхоз.

„Динамо“ колхоз XVIII партконференци тĕлне

Пирĕн колхоз кăçал кашни гектартан 25 центнертан кая мар тĕштирĕ туса илессишĕн кĕрешет. Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцине хатĕрленĕс ĕçсене эпир пĕтĕмпех хамăр умма лартнă тĕп задачăна çыхăнтарса туса пытăмăр. Çуракине пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленсе çитесси, хĕллехи агротехникăллă ĕçсене пурнăçласа пырасси, государство умĕнчи парăмсене пĕтĕмпех парса татасси—партконференци умĕнхи ăмăртăва тухса илнĕ обязательствăсем пулса тăраççĕ. Хăй çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе пирĕн колхоз Варасăрти «Правда» колхозпа ăмăртса ĕçлет.

Паян, XVIII партконференци уçăлнă кун, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хамăр çине илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларăмăр тесе уççăнах калама пултаратпăр. Пирĕн «Динамо» колхоз кăçалхи çуракине пур енĕпе те пĕтĕмпех хатĕрленсе çитрĕ. Çакна пирĕн колхозниксем большевиксен XVIII конференцийĕ ячĕпе тунă пысăк ĕçсем парне тесе шутлаççĕ.

Вăйлă тырпул туса илес çĕрте вăрлăха малтанах лайăх хатĕрлесе акни пысăк выран йышăнать. Çакна шута илсе кăçал та, иртнĕ çулхисем пекех, çуракинче акмалли вăрлăхсене тĕплĕн хатĕрлесе хутăмăр. Вăрлăхсене йăлтах сортласа триер витĕр кăларнă. Вăрлăх участокĕ çине акмалли тулăпа урпа вăрлăхĕсене алăпа суйларăмăр. Сĕлĕ вăрлăхне триер витĕр кăларнă хыççăн пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çине акмалăхах тевĕр хут шултра ала витĕр аласа хутăмăр. Пăрса тата чина вăрлăхĕсене те пĕтĕмпех алăпа суйланă.

Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене пурне те тĕплĕн юсаса, сарайне типтерлĕ пустарса лартнă. Урапасене тата лаша кӳлмелли ытти хатĕрсене кĕркуннех юсанă, çĕнĕрен 20 стан кустăрма туянса хутăмăр. Хĕле кĕнĕ хыççăн 30 çуна туянтăмăр. Кӳлмелли хатĕрсем кашни лаша валли уйрăм комплект, вĕсем ытлашшипех пирĕн.

Çуракине вăхăтра, кĕске срокра туса ирттерес ĕç туртăм вăйĕнчен килет. Чăнах та, чылай ĕçсене машинно-тракторнăй станци туса парать. Анчах эпир ун çине çеç шанса ларма пултараймастпăр. Çавăнпа та пирĕн лашасем вăйлă тата мăнтăр пулмалла. Ăна тума «Динамо» колхозăн май пур. Выльăх апачĕ çителĕклĕ. Конюхсем лашасене аван пăхаççĕ, выльăх анатне типтерлĕ тытлаççĕ, вăхăтра апат параççĕ, вăхăтра шăвараççĕ, витесем таса. Выльăх апачĕсене перекетлесси çине уйрăмах хытă çаврăнса пăхатпăр.

Колхозри агротехникăллă ĕçсене пĕтĕмпех план тăрăх туса пыратпăр. Ик-виç цифра илсе кăтартма пулать. План тăрăх колхозăн 230 гектар çинче ор тытмалла пулнă, эпир 240 гектар çинче тытрăмăр. Уя 4 пин лав тислĕк, 12 пин лав торф кăларнă т. ыт. Çаксене эпир наука хушнă пек тата хамăрăн иртнĕ çулсенчи опытсем тăрăх туса пыратпăр. Колхозра хатă лаборатори организацилерĕмĕр, вăл пире опытлă ĕçсем тума, ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене наука хушнă пек туса пыма май панать. Халь пирĕн колхозниксем пикенсех агротехникăна вĕренеççĕ, ку тĕлĕшпе стахановла шкул ĕçлет. Унта 70 çынна яхăн вĕренет. Вĕсем—бригадирсем, стахановецсем, опытниксем. Шкула райçĕрĕç пайĕн агрономĕ Салаев юлташ ертсе пырать. Кĕскен каласан, çакăн пек ĕнтĕ пирĕн колхоз çуракине хатĕрленес çĕрте тунă çитĕнӳсем.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те кашни çулах вăйланса пырать. Колхозра пĕрлештернĕ выльăхсен хисепĕ ӳсрĕ, вĕсен продуктивлăхĕ чылай лайăхланчĕ. Кăçал пирĕн колхоз кашни ĕнерен 1500 литртан кая мар сĕт суса илессишĕн кĕрешет, ăна пурнăçлатпăр те-се татăклăнах калама пулать. Пĕлтĕр те эпир кашни ĕнерен 1200 литр ытла суса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес çĕрте çамрăк выльăхсене кĕтсе илесси уйрăмах ответлă ĕç пулса тăрать. Çакна шута илсе, пирĕн колхоз çамрăк выльăхсене кĕтсе илме малтанах хатĕрленсе тăчĕ. Иаянхи куна МТФ-ра 30 ĕне пăруланă, çамрăк пăрусем пурте сывах, 24 сурăх пăрамларĕ, пугекесем те пурте сывах. Выльăх-чĕрлĕх фермисем колхоза пысăк тупăш паraççĕ, иртнĕ 1940 çулта кăна колхоз фермăсенчен 45.800 тенкĕ тупăш илчĕ.

Колхоза пысăк тупăш паракан тепĕр çăлкуç вăл—пахча-çимĕç пулса тăрать. Ку тĕлĕпте те «Динамо» колхоз пысăк ĕçсем туса пырать. 1940 çулта колхоз пахча-çимĕçĕсенчен 38.500 тенкĕ, хăмла пахчинчен 20 пин тенкĕ, пурçăн хуртĕнчен 5 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

Сад-пахча ĕрчетес енĕпе малашлăх татах та пысăк. Иртнĕ çулта 4,5 гектар çинче çырла сачĕ, 3,5 гектар çинче улмуççи сачĕ хурса хăвартăмăр. Çырла садĕнчен кăçалах тупăш илетпĕр, тепĕр ик-виç çултан улмуççи садĕнчен тупăш илме ĕмĕтленетпĕр. Кăçал тата теплица турăмăр. Унта ирхи çимĕçсем: сухан, редиска, хăяр лартатпăр. Арбуз туса илме те май пур, ăна пĕлтĕрхи опыт кăтартса пачĕ.

Çаксем пурте общественнăллă хуçалăха вăйлатса, çирĕплетсе пыма, колхозăн укçа-тенкĕ тупăшне ӳстерме, колхозри строительство ĕçне анлăн сарса пыма май параççĕ.

Кăçалхи майăн 16-мĕшĕнче пирĕн «Динамо» колхоз 10 çул тултаратъ. Вунă çул хушшинче хуçалăхпа организаци енчен çирĕпленсе чăнпипех большевикла колхоз пулса тăчĕ. Аманик ялĕн сăн-сăпачĕ палламалла марах улшăнчĕ. Радиоузел, саслă кино-установка, клуб, вулав çурчĕ, ача çуратмалли çурт, парикмахерски, хатă-лаборатори тата ытти çавăн пек культурăллă учрежденисем пур,—çаксем пурте колхозлă ялăн пуянлăхĕсем пулса тăраççĕ. Пирĕн колхоз авăн çапас, арман авăртас, çăм тапас ĕçсене механизацинелĕ. Ку ĕçре пире комбинат пулăшать, вăл колхоза электро-энерги парса тăрать. Кашни колхозник килне электричество кĕртнĕ.

Колхоз икĕ çул хушши Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулчĕ, вăл унта хăйĕн çитĕнĕвĕсене тĕплĕн кăтартса пачĕ. Главвыставком мана, колхоз председательне, Пĕчĕк ылттăн медаль парса наградăларĕ. Кăçал та пирĕн колхоза выставка участникĕ пулма кандидата çирĕплетнĕ.

Çак çитĕнӳсене вĕсене колхозниксем куллен тăрăшса, çине тăрса ĕçленипех тунă. Вăл çитĕнӳсем колхозри паллă стахановецсен ячĕпе çыхăннă, вĕсемпе пирĕн кашни колхозник хĕпĕртесе савăнать, малашне татах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшать.

Коммунистсемпе комсомолецсем колхоз производствинче малти рете тăрса пример кăтартса пыраççĕ. Нумаях пулмасть республикăри хаçатсенче пирĕн колхозри комсомолецсен пуçарăвĕ çинчен материалсем пичетлесе кăларчĕç. Ялхуçалăхĕнче кирлĕ специальноçсене вĕренме колхоз çамрăксем валли пур условисене те туса парать. «Динамо» колхоз çамрăкĕсем хăйсен обязательствисене ĕçре пурнăçлама тытăнчĕç. Радиоузелта электричество ĕçне вĕренеççĕ т. ыт. Колхозри чылай ĕçе механизацилени çамрăксене электромонтер, машиновед, механик ĕçĕсене вĕренме май параççĕ. Вĕсем кашни пушă вăхăтна хăйсен квалификацине ӳстерес çĕрте усă курасçĕ. Каçхи вăхăтсене клубра, стахановецсен шкулĕнче ирттереççĕ.

Пирĕн, большевиксен, нихăçан та тунă çитĕнӳсем çинче лăпланса лармалла мар. Эпир ĕçри çитĕнӳсен хисепне малашне те ӳстерсе пырса колхоза татах та вăйлăрах, çирĕпрех, пуянтарах туса хурассишĕн ĕçлетпĕр.

Партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцин ĕçĕсемпе унăн решенийĕсем колхозниксен йышлă массине социализмлă çĕрĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тума мобилизацилеç.

Аманикри «Динамо» колхоз председателĕ И. РЫБАКОВ.

Колхозри пуçламăш парторганизацин секретарĕ П. ЛАРИОНСВ.

Куславкка районĕ.

☆ ☆ ☆

Смена мастерĕсем

Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи стахановка комсомолка Татьяна Тихоновна Жукова юлташ, ăмăртса ĕçлесе, норма тăрăх сменăра 360 мăшăр вырăнне 400—450 мăшăр атă хатĕрлет. УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Т. Т. Жукова юлташ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Производствăна культурăллă организацилер

Канашри сĕтел-пукансем тăвакан фабрика коллективĕ партин XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле планран ирттерсе 10 пин тенкĕлĕх продукци пама пулчĕ. Мĕнле пурнăçа кĕртрĕмĕр-ха эпир хамăр сăмаха? Фабрика коллективĕ январьти плана 103 процент тултарчĕ, çапла вара планран ирттерсе 3 пин тенкĕлĕх ытла продукци пачĕ. Февралĕн малтанхи çуруйăхĕнче пирĕн 45 пин тенкĕлĕх продукци кăлармалла, эпир 10 кун хушшинче 43 пин тенкĕлĕх продукци кăлартăмăр.

Конференци умĕнхи ăмăртура коммунистсемпе комсомолецсем лайăх пример кăтартса ĕçлеççĕ. Комсомолка Суханова ертсе пыракан цех январьти плана 226 процент тултарнă. Комсомолецсем: Григорьев, Васильев тата ытти юлташсем икшер норма параççĕ. ВКП(б) членĕ Полячихина юлташ мастерсене çĕнĕ производствăсене вĕренме пулăшать. Çавăнпа пĕрлех вăл рабочисем хушшинче агитацилĕ-массăллă ĕçе туса пырать. Коммунистсемпе комсомолецсем рабочисем хушшинче хаçат-журналсем вуласа параççĕ, политинформацисем ирттереççĕ.

Коммунистсемпе комсомолецсем хăйсем плана ирттерсе тултарнипе кăна лăпланмаççĕ, вĕсем рабочисене ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешме организацилеççĕ. Коммунистсен опычĕпе ĕçлесе пĕртăван Зайцевсен бригади январьти плана 287 процент, столяр Цитцер 301 процент тултарнă.

Фабрика коллективĕ плана ăнăçлăн тултарнипе кăна лăпланмасть, вăл брак тата простойсем пулассине пĕтĕмпех пĕтересишĕн, чĕртаварсене перекетлĕн тытказассишĕн, производствăна культурăллă организацилесшĕн кĕрешет.

СЕРОВ.

Культполитсовет председателĕ.

Смена мастерĕсем

Мастер Андрей Семенович ытти куснсончи пекех, паян та ĕçе пуринчен малтан тухрĕ. Рабочисем киличчен вĕсем ĕçлекен станоксене пăхса çаврăнчĕ, отделенинче мĕн пур-çуккине пĕлчĕ. Унтан вăл цех начальникĕ патне кайрĕ.

—Мĕнле-ши паян материал енчен? — ыйтрĕ вăл начальникрен.

— Аптрамаллах мар, çитет, — ответлерĕ цех начальникĕ.

— Станоксемпе квалификацияллĕ рабочисем ĕçлеççĕ. Материал пулсан вĕсем икшер норма та тума пултараççĕ, — терĕ Андрей Семенович хыттăнах шантарса.

Цех ĕçе тытăнчĕ. Кашни рабочи хăйĕн вырăнĕнче. Машинăсен, станоксен шавĕ хытăран та хытă янрама пуçларĕ.

Андрей Семенович машиннăй отделенинче рабочисем мĕнле ĕçленине пăхса çӳрет. Кунта пĕтĕмпе 58 рабочи. Мĕнле ĕçлеççĕ вĕсем, мĕн ситмест? Материалсене йĕркеллĕ парса тăраççĕ-и? Брак тумаççĕ-и? Сахал-и курта мастерăн ĕçĕ. Пурăннĕн те вăл ответ тытать.

— Ну, ĕçсем мĕнле пыраççĕ? — ыйтать мастер станочник патне пырса.

— Лайăх, смена пĕтичченех капла ĕçлесен, нормăна икĕ хут ытла ирттерсе тултарма пултаратăп, — илтĕнет ответ.

Çав хушăрах мастер патне вăтам тӳллĕ, яштака кĕлеткеллĕ патвар çын пырать. Вăл мастера станок йĕркеллĕ ĕçлеменни çинчен каласа парать. Андрей Семенович вăхăта тăсмасăр васкаса вăл ĕçлекен станок патнелле утать. Вăхăт нумаях та иртмест, станок йĕркеллĕн ĕçлеме пуçлать.

Цехра смена ĕç пĕтерни çинчен пĕлтерекен звонок шăнкăртатса кает. Станоксем патĕнчен юлашки детальсем тухаççĕ, юлашки вагонеткăсем пĕсене турттарса каяççĕ. Çак вăхăтра вара ĕç татах та хĕрӳллĕн пынă пек курăнать. Чăн та вăл çапла. Мĕншĕн тесен рабочи юлашки минутăра темиçе штук деталь туса кăларма пултарать.

Ĕç пĕтнĕ хыççăн производствăллă канашлу пуçланать. Кĕске вăхăт хушшинчех паянхи ĕçĕн итогĕсемпе палăшаççĕ. Çакăнтах кам лайăх, кам янăх ĕçлени, камăн ĕçĕнче мĕнле чăрмав пулни çинчен пĕлеççĕ, ситменлĕхсене пĕтерес енĕпе ырă сĕнӳсем параççĕ.

— Юлташсем, паянхи куна эпир плана тултарас тĕлĕшпе ытти сменăсенчен малта пыратпăр, — тет вара канашлăва вĕçлесе Андрей Семенович. — Анчах куншпа лăпланма кирлĕ мар. Пирĕн задача—тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, татах та пысăкрах ӳсĕмсем тăвасси, партконференцине çĕнĕ çĕнтерӳсем тунине кĕтсе илесси пулать.

Çапла ĕçлет древкомбинатри 3-мĕш номерлĕ цехри смена мастерĕ Андрей Семенович Байняшев юлташ. Вăл хастарлă та çивĕч. Пăхатăн та çак çын çине, ыттисенчен нимĕнле уйрăмлăх та çук пек туйăнать: нумаях вĕренмен, нимĕнле изобретени те çук. Ытти рабочисем пекех, комбината кĕрсен рядовой рабочи пулса ĕçленĕ. Каярахпа станочник пулнă. Халĕ смена мастерĕнче ĕçлет.

Анчах мастерăн ĕç сахал мар. Вĕсене Байняшев юлташ ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Çавăнпа та унăн смени уйăхран уйăха плана ирттерсе тултарать. Январь уйăхĕнче, акă, плана 113 процент тултарнă.

— Ку сменăри стахановецсем тухăçлăн ĕçлеççĕ, паха результатсем кăтартаççĕ, — теççĕ вара рабочисем кăтарту хăми çине пăхса.

Байняшев юлташ смененче 58 çынтан стахановецсемпе ударниксем 40 çын ытла, нормăна тултарса ĕçлеменнисем пĕтĕмпе те 2 çеç. Вĕсем те икĕ эрне каялла ĕçлеме пуçланăскерсем кăна. Паллă стахановецсем Т. Баклановпа, В. Большакова, К. Мартынова, О. Алексеева, Дужникова, Юмшаков, Николаев юлташсем кулленхи нормăна 140—200 процент тултараççĕ. Рабочисем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ.

— Смена лайăх ĕçлени вăл çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерсе пынинчен те чылай килет. Ку тĕлĕшпе эпир тăтăшах производствăллă канашлусем туса ирттеретпĕр, — тет Байняшев юлташ.

— Акă январĕн 17-мĕшĕнче пулнă канашлура рабочисем станоксене сĕрме çу çителĕксĕрри çинчен пĕлтерчĕç. Кун çинчен эпĕ цех начальникне пĕлтертĕм. Тепĕр ик кунтан вара пире çу кирлĕ чухлĕ пачĕç. Сверло, лейка пирки те рабочисем ыйтăва вăхăтра пуçарчĕç. Çавăн хыççăнах вĕсене тума заказ панă. Тĕрлĕ ыйтусене сӳтсе-явăтпăр эпир,—каласа парать мастер.

Халĕ смена коллективĕ нихăçанхинчен те пысăк хастарлăхпа ĕçлет, Лапшов юлташ сменипе ăмăртăва тухнă. Коллектив ӳлĕм те ăмăртăва сарса малта пырассишĕн кĕрешет.

* * *

Коммунист В. Борзова, комсомолец М. Яковлев юлташсем те 3-мĕш номерлĕ цехра смена мастерĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем те нумаях пулмасть рядовой рабочи пулнă, чăн малтанах нормăна та тултарайман. Тăрăшса вĕренсе, ĕçлесе пынă, пĕлĕвĕ хăпартассишĕн сахал мар вăя хунă. Тăрăшни харама кайман.

Акă, М. Яковлев юлташа илер. Вăл ĕнтĕ комбинатра вунă çул ĕçлет. Станочник пулнă, унтан ăна техприемщика куçарнă. Хастарлă комсомолец ĕçе яланах тӳррĕн, йĕркеллĕн туса пынă. Лайăх ĕçленине кура 1938 çулта ăна смена мастерне лартнă.

— Малтанах йывăр пекчĕ. «Епле-ха, сменăна ертсе пымалла вĕт?» тесе шутлаттăм. Каярахпа ĕçлеме пултармаллине хамах туйса илтĕм. Халĕ акă, ĕçлеме ним те мар, — тесе каласа парать Яковлев юлташ.

Унăн сменинче 62 рабочи. Вĕсенчен стахановецсем çурри ытăа, нормăна тултарайманнисем çук. Уйрăм стахановецсем: Кочетков, А. Ганина, Н. Павлов, Кукушкин юлташсем нормăна икшер хут ирттерсе тултараççĕ. Смена январь уйăх планне 107 процент тултарнă. Паллах, сменăна кирлĕ чухлĕ чĕртавар парса тăнă пулсан, вăл татах та ытларах, тухăçлăрах ĕçлеме пултарнă. Анчах материал çитменни ĕçре чылай чăрмантарнă.

— Ĕç дисциплинине çирĕплетсех пыратпăр, ăмăрту паха результатсем кӳрет. Анчах, шел, чылай чухне материал çуккине пула простой пулать. Темшĕн-çке çителĕклĕ тăратмаççĕ, — тет Яковлев юлташ.

Ĕç дисциплини çирĕпленсе пыни мастер хăйне панă правăпа туллин усă курнинчен те, вăл рабочисем хушшинче авторитетпа усă курнинчен те килет. Иртнĕ çулсенче часчасах çапла пулнă: рабочин киле е урăх çĕре каймалла пулсан, вăл мастертан ыйтмасăрах цех начальникĕнне патне кайнă. Цех начальникĕ вара ăна мастерпа каласмасăрах янă. Халь рабочи мастертан ыйтмасăр ниçта та каяймасть, чăн малтанах ун патне пырать. Вăл мĕн калать, мĕн тума хушать, çавна пурнăçласçĕ те рабочисем.

Борзова юлташ ертсе пыракан смена Яковлев сменипе ăмăртса ĕçлет. Калас пулать, смена коллективĕ кая юлса пымасть, тепĕр чухне Яковлев сменинчен иртсе те каять. Юлашки вăхăтра плана 150 процент таран тултарма пуçларĕ. Стахановец-коммунист Д. Фионов юлташ нормăна виçĕ хут ытла ирттерсе тултарать. Январь уйăхĕнче вăл 527 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Вера Борзова юлташăн хисеплĕ ĕçне хакласа иртнĕ çулта СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕ «Отличнику социалистического соревнования» значок парса наградăларĕ. Çак награда ăна тухăçлăн ĕçлеме хавхалантарать. Çавăнпа смена хăйĕн ĕçне лайăхлатсах пырать.

3-мĕш номерлĕ цех коллективĕ Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса çĕнĕ çĕнтерӳсем тума пулчĕ. Коллектив панă сăмаха пурнăçласа пырать. Январь уйăх планне ытлашшипех тултарнă (1940 çулти плана та вăл ытлашшипех тултарнă). Цехра пурте ăмăртса ĕçлеççĕ, вĕсенчен 177 стахановец тата 40 ударник куллен хăйсен ĕç нормине ирттерсе тултараççĕ. Кашни кун кам мĕнле ĕçлени çинчен кăтарту хăми çине сырараççĕ.

ХАР. ЛИСИН.

Çĕмĕрле

Пĕтĕм коллективĕпе стахановла ĕçлессишĕн

Канашра тăватă чугунçул пĕрлешет. Кунтан кашни кунах поездсем иртсе çӳреççĕ. Пирĕн, вагоннăй цехри работниксен, вăл поездсене йышăнса илсе, тĕрĕслесе тухмалла тата вагонсен юсав мар деталĕсене юсамалла. Çак ĕçсене лайăх туса пыни поездсене вăхăтра çӳретес, вагонсене упрас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пĕр вагон çинче рессор, буфер, подшипник е ытти мĕнле те пулин деталь юсавлă пулманни пĕтĕм состава сиенлеме е тепĕр чухне авари тума пултарать. Çавăнпа пирĕн хамăрăн ĕçе яланах тĕплĕн туса пымалла.

Пирĕн коллективăн ĕçĕ лайăхланса пырать. Уйрăмăнах вăл партин XVIII конференцийĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн палăрчĕ. Ăмăртăва хутшăнса, пирĕн коллектив брак пулассине пĕтерме, поездсене вăхăтра ăсатма пулчĕ. Çаксене халĕ ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Эпир осмотрщик-автоматчиксемпе, слесарьавтоматчиксемпе пĕрле поездсене килнĕ чухнех йышăнса илессине организацилерĕмĕр. Ку пире хамăр ĕçе хăвартлатма май пачĕ.

Рессорсем улăштарас срока 8 минутăран 4 минутăна çити чакарнă.

Рабочисем производствăра ĕçленĕ вăхăтра хăйсен пĕлĕвне ӳстерессишĕн тăрăшаççĕ. Техника кружокне çӳресе эксплоатаци йĕркисене вĕренеççĕ. Кулленех пухăнса хаçат-журналсем вулатпăр, хамăрăн Совет Союзĕнчи хыпарсене, тĕнчери лару-тăру çинчен пĕлсе тăратпăр. Производствăра нумай вăхăт ĕçлекенсем хăйсен опычĕсене çамрăксене параççĕ. Вагоннăй цехра эпĕ 1933 çултанпа ĕçлетĕп. Çак вăхăтра 4 çамрăка осмотрщик-автоматчик пулса ĕçлеме вĕрентĕрĕм. Вĕсенчен чылайăшĕсем халĕ Канашра ĕçлеççĕ. Производствăра стахановла ĕçленĕшĕн пире хисеп тăваççĕ. Çакă пире савăнтарать, татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать.

Эпир конференци умĕн пуçланнă ăмăртăва сарса пырса малашне пĕтĕм коллектива стахановла ĕçлекен тăвассишĕн кĕрешетпĕр.

П. МАКАРОВ.

Осмотрщик-автоматчик.

СССР ЧИККИНЕ ПЁТЁМ СОВЕТ ХАЛĂХЁ СЫХЛАТЬ!

УКЕРЧЁК ÇИНЧЕ: Шалти Ессен Халăх Комиссариачён чикёри войскисем 20 çул тултарнă тёле «Искусство» издательстви кăларнă плакат. Плаката художник А., Кокорекин тунă. Г. Широков репродукцийё (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇЁ

Парторганизаци вăйлă тырпулшăн кёрешес ёçре

1940 çулта Елчёк районёнчи нумай колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчёç. Парти членён кандидачё Дергунов юлташ ертсе пыракан «КИМ», çамрăк коммунист Левый юлташ ертсе пыракан Патрекелёнчи «Осоавиахим» колхозсем кашни гектартан вăтам шутпа 115-шер пăт, Ленин ячёпе тăракан, «Марс», орденлă «Ново-Ищеряково» колхозсем 90—95 пăт таран, «Осоавиахим» колхозри Абрамов юлташ звени гектартан вăтам шутпа 137 пăт тёштырă туса илчёç.

Елчёк районёнчи мёнпур колхозсем 1941 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 100 пăт тёштырă илес задача лартрёç.

Илнё обязательствăна чыслăн пурнăçлассишён, çуракине кăтартуллăн хатёрленнипе тухассишён 44 колхоз, 161 бригада, 93 звено, çёршер колхозниксем социализмлă ăмăртăва хутшăннă. Парторганизаци ăмăртăва куллен ертсе пырать.

Ленин ячёпе тăракан колхозра социализмлă ăмăртăва пуçламёш парторганизаци пуçарса пырать. Парторганизаци пуçарнипе колхоз гектартан 100 пăт тёштырă туса илме пулса, Таяба Энтричи «Смычка» колхоза социализмлă ăмăртăва чённё. Колхоз илнё обязательствăсенэ тивёслипе пурнăçлать. Пётёмёшпе илсен, колхоз çуракине хатёрленсе çитнё. 64 плуг, 10 сеялка юсаса лартнă, вăрлăхсене икшер хут сортласа тасатнă, уя 4000 лав ытла тислёк, 1802 тонна торф кăларнă, 400 гектар çинче юр тытнă. Тухăçлă тырпулшăн кёрешес ёçре коммунистсем малта пыраççё. Çамрăк коммунист Виссарионов юлташ ертсе пыракан 6-мёш бригада 3-мёш бригадăпа ăмăртса ёçлесе, 113 гектар çинче юр тытнă, 590 лав ытла тислёк, 15 центнер ытла кайăк-кёшёк тислёкё хатёрленё.

Шăмалакри пуçламёш парторганизацин пуçарулăхне те кăтартмасăр ирте çук. Коммунистсем колхоз производствине большевикла ертсе пынине пула «Вторая пятилетка» колхоз çуракине йăлтах хатёрленсе çитнё. Ялхуçалăх машинисем, лаша кўлмелли хатёрсем юсавлă, лашасем тутă. Уйра юр тытас плана колхоз 160 процент тултарнă, 3738 лав тислёк турттарса кăларнă, 76 центнер кёл пуçтарнă.

Партин Энтебери кандидат группин руководителё, Максим Горький ячёпе тăракан колхоз председателё орденоносец А. Табаков юлташ çапла калать: колхоза малти вырăна кăларатпăр, кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тёштырă туса илетпёрех.

Максим Горький ячёпе тăракан колхоз кашни гектартан 18 центнер ыраш, 17 центнер сёлё, 18 центнер тулă, 13 центнер хуратул, 110 центнер сёрулми туса илме пулса, районра малта пыракан «Марс» колхоза ăмăртăва чённё. Горький ячёпе тăракан колхоз членёсем хăйсен обязательствине ёçпе çирёплетеççё. Февралён 1-мёшне ку колхоз юр тытассине 171 процент, уя тислёк турттарассине 117 процент пурнăçланă, 130 центнер кайăк-кёшёк тислёкё хатёрленё. Вăрлăх фондне пётёмпех хывса çитернё, Канашран минерал удобренисене йăлтах кўрсе килнё. 40 çын пёр сиктер месёр агрокружокра вёренеççё.

Пуçламёш парторганизацисем тата ВКП(б) райкомё кăçал тухăçлă тырпул туса илессипе нихăçанхинчен те лайăхрах ёçлеççё. Ялхуçалăхёнче малта пыракансен хисепё, çуракине хатёрленсе çитнё колхозсен шучё ўссех пырать. «Марс», «КИМ», «Осоавиахим», «Ново-Ищеряково», «Вторая пятилетка», М. Горький, Сталин ячёпе тăракан т. ыт. нумай колхозсем çуракине хатёрленсе çитнё, хёллехи агротехникăллă мероприятисене пурнăçланă.

Çураки кулленех сывхарать. Районри 54 колхоз çуракине пёрчёллё тата лăрса йышши культурăсене, тымарçимёссене пурё 20.740 гектара яхăн акса хăвармалла. Пысăк тата ответлă ёç. Çакă пуçламёш парторганизацисен çуракине хатёрленессине ертсе пырас ответлăхне темçне хут ўстерет.

Ирнё çулта хăшпёр колхозсем вăрлăх фончёсене вăхăтра хывманни çурки вăхăтёнче пысăк чăрмав кўчё. Пёрчёллё тырăсене акассине район 101 процент тултарчё пулсан та, курăк вăрлăхёсем акассине 96 процент çеç тултарчё. Çак пысăк çитменлёхе парторганизаци шута илме тивёçлё, мёншён тесен паянхи куна çитсе люцерна вăрлăх фончё хывас плана 18 процент, клевер — 80 процент кăна тултарни кăсалхи çуракинче те пысăк чăрмавсем патне илсе пыма пултарать.

Çуракине хатёрленес ёçре, ирнё çулхи пекех, «Коммунист», «Коминтерн», «Автогигант», «Красные Темяшки» колхозсем юлса пыраççё. Ку колхозсем вăрлăх фончёсем хывса çитермен, кашнинчех 200—250 центнер таран сёрулми вăрлăхё çитмест. Асăннă колхозсенче пуçламёш парторганизацисем çук. Вёсен рольне комсомол пуçламёш организацисен йышăнмалла, колхоз председателёсене кёске вăхăтрах вăрлăх хатёрлесе çитерме, агротехникăллă мероприятисене пурнăçлама пулăшмалла.

Трактор паркё çуракине организованно ирттерес ёçре пит те пысăк вырăн йышăнать. Анчах тракторсене юсасси çаплах çителёксёр пырать. Февралён 1-мёшне 71 трактортан ирнё те 34 трактор çеç юсанă. Сеялкăсене юсасси татах та янăх пырать. Анла пулсан та çак факт МТ Станцинчи пуçламёш парторганизацине, кунти коммунистсене нимён чухлё те пăшăрхантармасть. Вёсем çаплах трактористсем хушшинче политикăллă-массăллă ёçе большевикла туса пымаççё.

Ф. МАЙКОВ.

Коммунист-рационализаторсем

Çёмёрле комбинатёнчи рабочисем ирнё çулта производство ёçне лайăхлатса çăмăллатас тёлёпне сахал мар рационализаторла сёнўсем пачёç. Пурнăçа кёртнё сёнўсем кăна комбината çулсерен 192.554 тенкё перекетлеме май параççё.

Рационализацине изобретательство ёçне вăйлатас тёлёпне коммунистсем сахал мар ёçлеççё.

Коммунист В. Филимонов юлташ 4-мёш номерлё цехра технорук пулса ёçлет. Вăл тăрăшса ёçленипе юлашки вăхăтра цехра производство ёçне лайăхлатас тёлёпне чылай улшăнусем тунă. Ирнё çулта Филимонов юлташ эксгаустера тёрёссён ёçлеттерес енёпе питех те паха сёнў пачё. Ку сёнў çулталăкне 10.586 тенкё перекетлеме май парать. Авторне куншăн дирекци 315 тенкё преми панă.

Пёрремёш номерлё цехри технорук коммунист А. Мяронов юлташ панё сёнўсенчен цех çулсерен темиçе пин тенкё перекетлеч. Вăл кашни çулах рационализаторла сёнўсем парать. Çапла, 1939 çулта унăн сёнёвё тăрăх цехра транспортер тунă. Çакă вара çулти хутран материалсене йёркеллён куçарма май туса панă. Çитменне тата ку ёçрен икё çынна чакарнă, ёçре сураланассине пётернё. Çак сёнў тăрăх цех çулталăкра 6923 тенкё перекетлеме.

1940 çулта Миронов юлташ чёртавара запасра тытас майпа тепёр сёнў пачё. Сёнёве пурнăçа кёртнё ёнтё, вăл çулталăкне 6047 тенкё перекетлеме май парать. Автор уншăн 407 тенкё преми илнё.

Çамрăк коммунист П. Бирюков юлташ шайбасене сахаллатас тёлёпне питех те паха сёнў панă. Халё ăна пурнăçа кёртнё, вăл ёçе чылай çăмăллатать, ёç вăхăчёне туллин усă курма пулăшать.

(Хамăр корр.).

ВКП(б) Улатăр райкомён пленумё

Февраль уйăхён малтанхи кунёсенче ВКП(б) Улатăр райкомён пленумё пулса иртрё. Пленум ВКП(б) Чăваш Обкомён юлашки пленумён итогёсем, 1940 çулти ялхуçалăх ёçёсем тата партине çёнёрен членсем илесси мёнле пыни çинчен сўтсе-яврё.

ВКП(б) райкомён секретарё Крылов юлташ хăйён докладёнче парти Обкомён пленумён итогёсем, 1940 çулти ялхуçалăх ёçёсем çинчен тёплён чарăнса гăчё. Иртнё çулта вăрлăх тата выльăх çăчё тёлёппе пысăк йывăрлăхсем пулнă пулсан та, çуракине кёске вăхăтра вёçленё. Çураки планне ирттерсе тултарнă. Çав хушăрах уйрăм культурăсем тăрăх акмалли плана тултарайман.

Пётёмёшпе илсен, уборка вăхăтёнче район начарах мар ёçлерё. Чăн та, уйрăм колхозсем тырпулсене уйран пуçтарса кёрес тёлёппе чылай кая юлчёç, тырпул таккаланчё. Çапах та район 1940 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 13 центнера яхăн тёштырă пуçтарса кёнё. Уйрăм колхозсем, сăмахран, «Красная звезда», «Искра», «Красный партизан» тата Чкалов ячёпе тăракан колхозсем кашни гектартан 21 центнер таран тёштырă туса илнё.

Техникăллă культурăсем акса тăвас тёлёппе уйрăм колхозсем аван ёçлерёç. Район вăтам шутпа кашни гектартан 3,55 центнер йётён сўсё, 14,52 центнер махорка пуçтарса кёнё.

Пётём Союзри ялхуçалăх выставкин участникё Додонова юлташ хăйён звенипе пёлтёр 5,35 гектар лаптăк çинче кашни гектартан 40 центнер, рекордлă пёр гектар çинче 90 центнер махорка туса илнё.

Пленум машинно-тракторнăй станци ирнё çулта начар ёçленине палăртрё. МТС хăйён çулталăкри планне тултарайман.

Халё çуракине хёрсе хатёрленмелли вăхăт. Анчах, Улатăр районёнчи уйрăм колхозсем çуракине япăх хатёрленеççё. Вăрлăх фончёсене ку вăхăтченех туса çитермен. Удобренисем хатёрлес, вăрлăхсене сортласа тасатас, ялхуçалăх машинисене юсас тата юр тытас ёçсем питё вăрахăн пулса пыраççё.

1940 çулта ялхуçалăхёнчи чылай стахановецсем, ударниксем парти ретне кёме тивёçлё пулчёç. Çулталăк хушшинче колхозниксене 42 çынна парти ретне илнё. Хальхи вăхăтра ялсенче 9 пуçламёш парторганизаци, кандидатсен тăватă группи шутланать.

ВКП(б) райкомён пленумё сўтсе-явнă ыйтусем тăрăх тивёçлё решенисем йышăнчё.

БИРЮКОВ.

Парти ретне илес ёçри çитменлёхсене пётерер

ВКП(б) Центральный Комитечё парти ретне илес ёçри çитменлёхсене пётересси çинчен йышăннă постановлени хыççăн Çёмёрле районёнчи пуçламёш парторганизацисем хăйсен ёçне лайăхлатрёç. Парти ретне кёме заявленисем пана юлташсене тёплён пăхса тухассё, вёсем çинчен тёплён сўтсе-явăççё. Парти ретне практикăллă ёçре хăйсен тултарулăхне кăтартнă, Ленин—Сталин партине чун-чёререн парăннă юлташсене суйласа илеççё.

Ирнё çулти ноябрён 16-мёшпе кăçалхи февралён 1-мёшчен районёпе ВКП(б) членне 13 çын, кандидата 2 çын илнё. Вёсенчен рабочисем 4, служащисем 9 тата колхозниксем 2 çын.

Н. Николаев юлташ чылайранпа сыхăну уйрăмёнче ёçлет. Ёçре яланах пример кăтартать, пысăк авторитетпа усă курать. 1939 çулта вăл Халхин-Гол кўлли патёнче Япони самурайёсемпе паттăрăн кёрешнё. Çавăнпăн ăна СССР Верховный Совечён Президиумё Хёрлё ялав орденё парса наградăланă. Николаев юлташа ВКП(б) членне илнё.

Древкомбината рядовой рабочине пырса кёнё А. Миронов юлташ хăйён пёлёвне куллен ўстерсе пынипе цехра технорук пулма пултарчё. Производствăра лайăх тёслёхсем кăтартса ёçленёшён ăна СССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарё «Почетному работнику лесной промышленности» значокпа наградăланă. Нумаях пулмасть ăна парти членне илнё.

Çавăн пекех парти членне комбината техприемщик пулса ёçлекен К. Хайгов юлташа, Чăваш Улхаш ялсовет председательне Шивкин юлташа т. ыт. ге илнё. Вёсем ёнтё пурте Ленин — Сталин партине чун-чёререн парăннă çынсем, социализмлă çёршывăн хисеплё ывăлёсем.

Анчах хăшпёр çёрте партие чи лайăх çынсене суйласа илес йёркене пăсаççё-ха. Сăмахран, механеспунктри пуçламёш парторганизаци (партбюро секретарё Никитин юлташ) А. юлташа парти кандидатне илме йышăнна. Райком А. юлташа тёплёрех тёрёслесе пăхнă та вăл обществăллă ёçре кăна мар, хăйён ёçне те кирлё пек пурнăçаса пыманни палăрнă.

Хăшпёр парторганизацисенче тата парти кандидачёсене уйрăм поручени-ем парса ёçре тёрёслесе пырас енёпе çителёксёр ёçлеççё, кандидатсене куллен пулăшу памаççё. Вёсем валли тарласах калаçусем, докладсем, лекцисем сахал организацилеççё. Тепёр ыхăнтаттарса туса пымалла. Сăмахран, производствăрах малтанхи пулăшу парасси, сикекён чирсене уйăрма пёлесси тата ыт. те. Шупашкара илсен, çак ёçе хулари сывлăх пайён организацилемелле. Вăл, чăн та, сывлăх учрежденисене лекцисем вулама предприятисем çумне çирёплетни пекки тунă, анчах куллен ертсе пыма тата тёрёслесе тăма манса кайнă. Çавна пула лайăх ёçех нумай чухне хут çинче кăна юлать. Шупашкарти кирек мёнле предприятие е артеле илсен те, вёсенче медицинăпа санитари ёçё çителёклё пулса пыманнине курма пулать. Промкасса тăрăх лекцисем вулама уйăрса хунă укçа-тенкё çулран çулах юлса пырать.

Районсенче медицина пропаганди пушшех те кая юлса пырать. Районри тата ялти больницăсене ку ёçе ăнăçлăрах туса пыма эрнере пёр кун ятарласа профилактика кунё те уйăрса панă. Çав кун врачсемпе фельдшерсен ыйтусем тухса профилактика ёçне туса пымалла. Анчах кулленхи ёçре вăл пур çёрте те тата пур чух та мар пурнăçа кёрсе пырать. Трахомах илер. Эпир ăна тёппипе пётерес тетпёр пулсан, çак хёллехи кунсенче нимрен те ытла ёçлемелле, мёншён тесен çулла, ёç вăхăтёнче ёç пăртак йывăрланать. Трахомăпа кёрешес ёç— кашни больницăн, медицина работникён кулленхи ёçё пулмалла. Анчах куратпăр-и эпир ăна? Çук. Врачсем мар, трахомработниксем хăйсем те профилактика ёçне çителёксёр туса пыраççё. Сăмахран, Советский районри сывлăх пайёнче ёçлекенсем трахомăпа чирлисен шутне хăйсем те тёрёссипе пёлмеççё, хăшпёр чухне сведенисене райвоенкоматран илеççё. Кун пек цифрăсене чухăмăн шутлакан районсем е работниксем пёрре кăна мар. Вăл чи малтан çынсене, колхозсене пёлменничен, профилактика ёçне туса пыманничен, ытларах кабинетра ларса ёçлеме юратничен килет. Çёрпў районёнчи медработниксем ялсене, колхозсене тухса çўремеççё, трахомăпа кёрешес ёç ку районра вăйсăрланнă.

Хёллехи вăхăтра хăшпёр чирсем яланах нумайланаççё: грипп, ўпке шыçни, сыпной тиф, ача чирёсем тата ыт. те. Вăл чирсенчен сыхланас тесен, чи малтан профилактика ёçне сарса ямалла. Сыпной тиф ан пултăр тесен, нимрен малтан тасалăхшăн кёрешмелле, ытти чирсем те, тасалăх çителёклё пулсан, çыннăн хăрушă мар. Çапах та тасалăхшăн медицина работникёсем сахал кёрешеççё. Ишлей районёнче халё врачсем тата ытти медработниксем çителёклё пулин те, общественăллă мунчасем лартас ёçшён тăрăшни курăнмасть. Медработниксем ку ыйтăва тапратмаççё, халăха мобилизацилеме пёлмеççё. Çав вăхăтрах врачсен пропаганди ку ёçре пысăк усă пама пултарать. Иртнё çулсенче Сёнтёр районёнче врачсем тимлён ăнлантарнипе колхозсем культурăллă мунчасем туса лартни нумай пулнă.

Ача амăшён сывлăхне сыхласси ге профилактика ёçне мёнле лартнинчен килет. Колхозсенчи акушеркăсен кашни ача-пăчăллă семьенех, ача çуратакан кашни хёрарăмах пёлсе тăмалла. Сёнтёрвăрринче Октябрьский районёсенче çак ёçе пур акушеркăсем ге мар туса пыраççё, кил-йышра пулман акушеркăсем те пур.

Медицина пропагандине вăйлатассишён районсенче сывлăх пайёсем отчетлă пулмалла. Вёсен кашни медработниках татăклă заданисем парса тёрёслесе пымалла.

Профилактика ёçёсене туса пыма медработниксене ялсоветсен тата колхоз правленисен пулăшмалла. Вёсен те ял, колхоз тасалăхёшён ответлă пулмалла. Çапах та лекци е калаçу ирттерме врачсене чёнеken ялсоветсене, колхозсене пит сайра тёл пулма пулать.

Пёр вăхăтра, трахома чирёпе диспансеризаци тунă чух, профилактика ёçё пур районсенче те çёкленсе кайнăччё. Кайран, вырăнти советсемпе сывлăх учрежденийёсем ун çинчен манса пынă май, халь вăл ёç начарланчё.

Астăвас пулать, пирён чăваш республикинче ёлёкхи саманаран юлнă кивё йăласем те, чир-чёрсем те пур-ха, вёсем пётёмпех пётмен. Вёсене врач е фельдшер паракан эмельсемпе кăна пётерме çук. Профилактика ёçне кунранкун, çине тăрса туса пырсан, пур çёрте те, кашни кил-йышрах тасалăха çирёплетсе çитерсен кăна вёсене пётерме пулать. Пирён условире медицина пропаганди питё кирлё, пысăк ёç пулса тăрать. Ăна вăйлатасси кашни медработникăн тата кашни райсоветăн, ялсовечён, колхоз правленин паянхи задачи пулса тăрать.

К. П.

Хёрлё Çар кунне ёçри çитёнўсемпе кётсе илер

Шупашкар хулинчи ёççыннисем Хёрлё Çар кунне физкультурăпа оборона ёçне вăйлатнипе кётсе илеççё. Ку куна кăсал призыва кёрекен çамрăксем уйрăмăнах пысăк хастарлăхпа хатёрленеççё. Вёсем çирёп сывлăхлă, тўсёмлё, хăюллă тата кирек мёнле çантăлăка та хăнăхса çитнипе Хёрлё Çар ретне кайма тăрăмаççё.

Хулари призывниксем йёлтёрпе сўреме лайăх вёренсе çитрёç. Комсомолецсен йёлтёрлё кросне хутшăнса ГТО значокён хёллехи нормисене пысăк çитёнўсемпе пачёç. Çавăн пекех ГСО, ПВХО, «Ворошиловский стрелок» значокёсен нормисене те панă.

Кооптехникумра вёренекен призывниксем Хёрлё Çар кунне уйрăмăнах лайăх хатёрленеççё. Вёсене çар ёçне вёрентес тёлёппе военрук Орлов юлташ тăрăпса ёçленине палăртас пулать.

ВКП(б) хула комитечё Хёрлё Çар 23 çул тултарнă куна хатёрленесси çинчен сўтсе-явнă хыççăн, тёрлё массăллă ёçсем туса ирттерме палăртрё. Вăл шутран икё хутчен çуран походсем ирттерме пăхнă.

Февралён 10-мёшпе 23-мёш кунёсем хушшинче предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче пуринче те Хёрлё Çар 23 çул тултарни çинчен докладсемпе калаçусем ирттермелле. Çарпа физкультура ёçне татах та анлăн сарса пымалла.

Хальхи вăхăтра комсомолецсен йёлтёрлё кросё пырать. Ку кроса комсомолецсемпе пёрле кашни осоавиахимовецăн хутшăнмалла. Çавăн пекех малашне те йёлтёрпе йёркеллё сўремелле, тăван çёршыва сыхлама яланах хатёр тăмалла.

Февралён 21-мёшпе 22-мёш кунёсенче Шупашкар хулинчи предприятисенче, учрежденисенче тата шкулсенче Хёрлё Çар 23 çул тултарнă ятпа рабочисемпе служащисен пухăвёсем пулса иртмелле. Ку пухусенче Хёрлё Çар кунё тата çёршыв вăй-хăватне тёреклетесси çинчен докладсем туса памалла.

Хёрлё Çар кунё çитесси нумай юлмарё. Çавăнпа та пур учрежденисенче те ку куна ирттерме халех хатёрленмелле, физкультурăпа оборона ёçне вăйлатмалла.

АСАФЬЕВ.

Вăрманта

Вăрман ёçён стахановецёсене — Маня Ивановăпа Степан Кожуров юлташсене хисеплесе.

Паян кёмёл тумлă
Вăрмана мён пулнă?
Вăрмана кам килнё,
Мёнле вăй-хăват?
Мёнле вут-хăватлă
Чакми паттăр улăп
Хаяр аслати пек
Сасă ывăтать?

—Кунта паян тухнă
Ёçчен вёлле йыш пек
Вăрман ёçён паттăр
Ывăл-хёрёсем:
Ухлатса ўкеççё
Юман кёрешсем те,
Уппён ўпёneççё
Ватă хырсемех!

Ўппён ўпёneççё
Вичкён пуртă айён,
Вичкён пуртă айён
Турпас ытkăнать!
Хурçă пăчкă шавё,
Хавас ёç юррийё
Кăвак пёлётех
Ситсе çапăнать!

Хёл мучи хаярăн
Аскине пăхмасăр
Комсомолка Маня
Хыврё алсине...

Кунтах ак хисеплё
Ватă çын—Кожуров,
Бригадир вăл пирён,
Ёслет пирёнпех.
Çўçё те, сухал та
Хăйён ун шап-шурă-
Лăпкă ир пасарнă
Хыр лăсси пекех.

Кунта: çамрăк-ватă,
Кунта хёрпе каччă.
Иксёлми хаваслăх,
Савăнăç кунта.
Тайăлать ак курăк,
Тайăлать ак чăрăш,
Шуралса юлаççё
Çёршер тунката.

Пирён ёç хисеплё,
Чаплă, пархатарлă:
Тепёр хут çёкленёç
Тўннё кёрешсем,—
Вара чёнтёрленёç
Ирхи асамат пек
Пăлтăр-пăлтăр тумлă
Çёнё кёперсем.

Т. ИВАНОВ-ТАÇУК.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Субстратостат 11.700 метр çӳлĕшĕнче

А. Фоминпа Г. Голышев юлташсен чаплă вĕçевĕ

Совет воздухоплавателĕсем — Александр Фомин тата Георгий Голышев январĕн 17-мĕшĕнче субстратостатăн уçă гондолинче 11.000 метра яхăн вĕçсе хăпарнă хыççăн, февралĕн 13-мĕшĕнче стратосферăна çĕнĕрен вĕçсе çĕкленнĕ. Ку расра та вĕсем хăва хуллисенчен сыхса тунă корзинка сине ларса пынă.

Каçхине, ССР Союзĕн гидрометеорологи службин главнăй управленийĕнче, субстратостат экипажĕнчен телеграмма илнĕ. Телеграммăра çапла пĕлтернĕ: «15 сехет те 41 минутăра Иваново облаçĕнче, Гусь-Хрустальная районĕнчи Дудор ялĕ çывăхĕнче чиперех анса лартăмăр. Прибор кăтартнă тăрăх — 11.700 метр çӳлĕшне вĕçсе хăпарнă. «Потолокра» 20 минута хушши пулнă. Температура 56 градуса çити сивĕ пулнă. Приборсем лайăх ĕçленĕ. Чи çӳлĕ вырăнта пирĕншĕн начарри нимĕн те туйăнмарĕ. Заданине пурнăçа кĕртнĕ».

Потребкооперацин ӳсĕмĕ

Февралĕн 20-мĕшĕпе апрелĕн 5-мĕш хушшинче потребкооперацин ялти обществисен правленийĕсен, ревизи комиссийĕсемпе уполномоченнăйĕсен суйлавĕсем пулса иртеççĕ.

Юлашки икĕ çул хушшинче ялти потребобществăсене çĕнĕрен 10,5 миллион член ытла явăçтарнă. 1940 çул вĕçĕ тĕлне пайщиксен хисепĕ 38,5 миллион çынна çити ӳснĕ. 1941 çулта сельпосене татах та 7,5 миллион член илме шутлаççĕ.

1940 çулта ялти потребкооперацин суту-илӳ предприятийĕсем 226 пин предприятине яхăн пулнă. 1941 çулта 4 пин магазин ытла уçма, темиçе çĕр столовăй-буфет таврашĕ уçма шутлаççĕ.

Ялти кооперацин кадрĕсем ӳссе пыраççĕ. 36 кооптехникумра тата икĕ аслă шкулта 8,5 пин çынна яхăн вĕренеççĕ. 1941 çулта «суту-илӳпе кооперацин шкулĕсем 100 шкул ытла уçăлаççĕ. (ТАСС).

Сталин ячĕпе тăракан колхоз 15 çул тултарнă

ЧИТА, февралĕн 15-мĕш. (ТАСС). Борзинск районĕнчи (Чита облаçĕ) Сталин ячĕпе тăракан колхоз 15 çул тултарнă. Ăна организацинелĕреннех орденоносец Ф. Т. Сараев юлтан ертсе пырать.

Хуçалăха культурăллă тытса пынипе, колхозниксем организованнă, ĕçри дисциплина çирĕп пулни уйăрăм ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç тухăçлăхне вăйлăн хăпартса яма май панă. Колхоз çулсеренех государствăна нумай тырă, какай, сĕт, çăм паратъ. Нумай çулсем хушши ĕнтĕ вăл миллионшар доход илсе пырать, иртнĕ çул вара доход икĕ миллион тенке яхăн пулнă.

Пĕлтĕр 800 гектар уйăхире, 2.000 гектар улăх-çарана шăварнă. Пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ. Вăтам шутпа гектартан 24-шар центнер, хăшнĕр участоксем çинчен — 30-шар центнер тĕштырă пухса илнĕ.

Ялхуçалăх артелĕн вăтам шкул, больница, ача çуратмалли çурт, ачасен ясли, мунча, радиоузел пур. Обществăллă учрежденисемпе пурăнмалли çуртсене радио кĕртнĕ. Каçалхи çул колхоз театрне туса пĕтереççĕ. Довгокич юханшывĕ çинче гидроэлектростанци тума палăртнă, ун валли оборудовани илнĕ те ĕнтĕ.

Ровно хулинчи художествăллă музей

РОВНО. Хулара художествăллă музей организацинелĕ. Музейре — 300 картина, скульптурăсем, ӳкерчĕксем, гравюрăсем нумай. Нумайĕш картинăсене 200—250 çул каярах тунă. Вĕсем хушшинче вырăссен авалхи гравюри пур, ăна Петр I самани пуçланиччене тунă. Музей сумĕнчи библиотекăра сайра тĕл пулакан авалхи кĕнекесем 500 кĕнеке пур.

Крымра виноградниксене, цитрус плантацийĕсене анлăлатаççĕ

СИМФЕРОПОЛЬ. Крымри колхозсенче виноградниксен лаптăкĕ çулсеренех ӳссе пырать. Каçалхи çул 2.800 гектар çине виноград лартаççĕ. Виноград çеçенхирлĕ районсене сарăлса пырать. Цитрус плантацийĕсен лаптăкĕ те ӳсет. Ялта районĕнчи Тельман ячĕпе тăракан колхозра 2 пин тĕп лимон шăтарса ӳстернĕ.

Тундрăри кино

МУРМАНСК. Унăй çул каярах Заполярьери тундрăна, Кольски çурма-утрав çине пирвайхи хут кинопередвижка илсе пынă. Баренцов тинĕсĕн сыранĕ патне стойбищĕсенчен саамисем, коми-ижемецсем пынă. Вĕсенчен нумайĕшĕ 100—200 километр инçетрен пынă, кинопередвижка урăх çĕре куçсан, вĕсем пăлансем çине ларса ун хыççăн пынă.

Хальхи вăхăтра çурма-утравăн чи инçетри пункчĕсене те пĕрмаях кинопередвижка пырать.

Пысăк ялсенче — Ловозеро, Краснощелье, Иоканьга ялĕсенче—саслă кинотеатрсем пур. Каçалхи çул Лесное, Гремиха, Чудьявре поселокĕсенче тата ытти пунктсенче те кинотеатрсем уçăлаççĕ.



Англири çулсенчен пĕринче танксене хирĕç кĕрешме тунă укрепленисем. ТАСС фото-ӳкерчĕкĕ.

▲ ▲ ▲

Англири Халăх конгресне хутшăннă çынсене хĕсĕрлеççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Англири коммунистла «Дейли уоркер» хаçата хупнине хирĕçле кампани анлăн сарăлса пырать. Бредфордра иртнĕ протест митингăн председательĕ— тред-юнионсен совечĕн председательĕ пулнă. Летчăсэртри (Харт-форд графстви) машиностроительсен тред-юнионĕн икĕ отделенийĕ хаçата кăларма ирĕк пама ыйтнă. Нортгемптон графствинче тред-юнионсен совечĕ тред-юнионăн пур отделенийĕсене те протест кампанине хутшăнма чĕннĕ. Машиностроительсен тред-юнионĕн икĕ отделенийĕ протест резолюцийĕсем янă та ĕнтĕ. Нориджра (Норфолк графстви) протест митингĕнче лейбористсем, независимăй лейбористсем тата коммунистсем туха калана. Кембриджра 75 студент урамсенче плакатсем йăтса çӳренĕ. Кембриджри университетри нумай профессорсем правительство «Дейли уоркера» хупнине хирĕç хаçатсене протестсем сырма янă. Çурçĕр-хĕвелтухăç сыранĕнчи округра тред-юнионсен нумай отделенийĕсем те, уйрăмăн илсен, горняксемпе машиностроительсем протест резолюцийĕсем йышăннă.

„Дейли уоркер" хаçата хупнине хирĕçле кампани

ЛОНДОН, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС). Англире коммунистла «Дейли уоркер» хаçата хупнине хирĕçле кампани анлăн сарăлса пырать. Бредфордра иртнĕ протест митингăн председательĕ— тред-юнионсен совечĕн председательĕ пулнă. Летчуэртри (Харт-форд графстви) машиностроительсен тред-юнионĕн икĕ отделенийĕ хаçата кăларма ирĕк пама ыйтнă. Нортгемптон графствинче тред-юнионсен совечĕ тред-юнионăн пур отделенийĕсене те протест кампанине хутшăнма чĕннĕ. Машиностроительсен тред-юнионĕн икĕ отделенийĕ протест резолюцийĕсем янă та ĕнтĕ. Нориджра (Норфолк графстви) протест митингĕнче лейбористсем, независимăй лейбористсем тата коммунистсем туха калана. Кембриджра 75 студент урамсенче плакатсем йăтса çӳренĕ. Кембриджри университетри нумай профессорсем правительство «Дейли уоркера» хупнине хирĕç хаçатсене протестсем сырма янă. Çурçĕр-хĕвелтухăç сыранĕнчи округра тред-юнионсен нумай отделенийĕсем те, уйрăмăн илсен, горняксемпе машиностроительсем протест резолюцийĕсем йышăннă.

Таипе Индо-Китай хушшинчи çапăçусем

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви пĕлтерĕ тăрăх, Японин Бангкокри миссийĕ Таипе Индо-Китай войскисем хушшинче, перемири тунă пулсан та, пысăках мар çапăçусем пыраççĕ, тесе пĕлтернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Франци правительстви Таи войскисем Франци Индо-Китайĕпе Таи хушшинче тунă перемирине çаплах пăснă пирки Японие протест панă.

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ.

Керенăн хĕвелтухăç пайĕнче итальянецсен часĕсем, Итали командованийĕн сводкинче пĕлтернĕ тăрăх, бомбардировщиксем пулăшнипе Англи войскисен вăйлă атакисене сирсе янă. Эритрейăн çурçĕр пайĕнче англичансем халăх сахаллăн пурăнакан пункта— Эль-Гхена йышăннă, вĕсем халĕ хăйсене малалла кайса пыма чăрмантараканни икĕ высотана атакăлаççĕ. Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англи часĕсем чикĕри Карора ятлă пункта илнĕ чухне 43 пыçна тыткăна илнĕ, 7 пулемет тата 50 верблюд туртса илнĕ. Омо юханшывĕ патĕнче Итали войскисем, Итали сводкинче калана тăрăх, Англи часĕсем атакине сирсе янă.

Англин çурçĕр Африкăри войскисем çине Германи авиацийĕ вăйлăн пыра-пыра тапăнать. Киренаикăн çурçĕр пайĕнче, тесе калана Германи сводкинче, Германи самолечĕсем Англи войскисен лагерĕсемпе çар сооруженийĕсем çине пысăк калибрлă бомбăсем пăрахнă.

Январь уйăхĕн варринчен пуçласа Германи самолечĕсем Суэц каналĕ патĕнчи пунктсем çине темиçе хутлĕх те пырса тапăннă, тĕрлĕрен портсемпе чугунсулсен линийĕсене ĕмĕрнĕ. Германи сводкинче кăтартнă тăрăх, канал тăрăх пароходсем çӳресси пăсăлнă.

Кунсăр пуçне, Германипе Итали самолечĕсем Мальта çине час-часах пыра-пыра тапăнаççĕ. Англи авиацийĕ, тесе пĕлтернĕ Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи войскисен командованийĕн коммюникинче, итальянецсен Комизори тата Катанири (Сицилия) аэродромĕсем çине пырса тапăннă.

Албанири фронтра авиаци ĕçĕ вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Италин верховнăй командованийĕн сводкинче кăтартнă тăрăх, Итали самолечĕсем противникăн базисем, çулсемпе артиллери позицийĕсем çине ăнăçлăн тапăннă. Греци войскисем, транспортсем тата лагерьсем çине пĕчĕк калибрлă бомбăсем пăрахнă. Итальянецсем Волос, Янина тата Превеза ятлă хуласем çине бомбăсем пăрахнă. Греци авиацийĕ итальянецсене хирĕç хыттăн тăнă, часчасах çапăçăва кĕрсе кайнă. Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтĕрнĕ тăрăх, Греци самолечĕсем Родос утравĕ, Валона, Элбасан тата Тепелене çине пырса тапăннă. Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Греци войскисем Тепелене хулине йĕриташа хупăрласа пыраççĕ. Çак хулашăн çапăçусем темиçе эрне хушши пыраççĕ ĕнтĕ. Тепелене Валонăна каякан тĕп çула контроллесе тăрать. Валонăна каякан тепĕр çул тинĕс хĕррине пырать. Пĕтĕм фронтĕпех, Тепелене патĕнчен пуçласа Погрядец патне çинчченех, грексем пĕрмаях артиллерипе персе тăраççĕ.

Германин çар карапĕсем, тесе пĕлтернĕ Германи командованийĕн сводкинче, Англи судписен караванне атакăланă, таварсем турттаракан пароходсене 13 парохода путарнă. Германи бомбардировщикĕсем Темза шывĕ тинĕсе юхса кĕнĕ çĕрте вăрçă тĕлĕшĕнчен палăртă вырăнта тăракан объектсем çине пырса тапăннă. Февралĕн 12-мĕшĕнче тата февралĕн 13-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германин инçете перекен орудийĕсенчен кăнтăр-хĕвелтухăç Англири çар объекчĕсем çине пенĕ.

Англи самолечĕсем Голландири хăшнĕр пунктсем çине тапăннă. Голландири нумай вырăнсенче фугаслă тата вут чĕртекен бомбăсем пăрахнă.

Февралĕн 13-мĕш. (ТАСС).

Уилки выступленийĕ

ВАШИНГТОН, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен калакан закон проектне сӳтсе-явнă чухне ютсĕршыв ĕçĕсен сенатри комиссийĕнче Уилки сăмах тухса калана. Сенатри комиссине çав закон проектне уláштарусем кĕртсе йышăнма чĕнсе, Уилки çакăн пек сĕнӳ панă: Пĕрлешӳллĕ Штатсен Англине кашни уйăхрах 5—10 эсминец парас пулать, тенĕ. Вăл калана тăрăх, судăсем сӳртес ĕç йĕркерен тухас хăрушлăх — Англишĕн чи пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Англи валли Атлантика океанĕнче пароходсене хӳтлесе сӳреме эсминецсем нумай кирлĕ. Пĕрлешӳллĕ Штатсен эсминецсене Англине ярас умĕн юсас пулать. Англи докĕсенче эсминецсем нумай пухăнса тăни, тенĕ Уилки, Америка Англине панă 50 эсминеца юсама чăрмантарать. 1942 çулта Пĕрлешӳллĕ Штатсен кашни уйăхрах 15—20 эсминец туса кăларас пулать, тенĕ Уилки.

Уилки пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль ăна çапла калана: хальхи вăхăтра Англия Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен пуринчен ытларах эсминецсем, пароходсем тата бомбардировщиксем ыйтать. Англия, тенĕ Уилки, Атлантикăра судăсем сӳретес ĕç кирлĕ пек хӳтлесе тăма пултараймасть. Хăш чухне 30—40 парохода икĕ эсминец кăна хӳтлесе пыраççĕ. Англири ответлă çынсем хушшинче çапла шутлаççĕ: Англи снабженин çулĕсене хăй аллинчен вĕсертмесен, вăл çуркунне тата çулла вăрçăна чăтса ирттерме пултарать. Уилки калана тăрăх, Англи поражени тӳссен, ун хыççăн Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăрçăна явăçса кайĕç. Президента «кирлĕ мар сĕртенех полномочисем» памалла тăвас мар тесе, Уилки закон проектне тĕрлĕ уláштарусем кĕртме сĕннĕ.

США-н тинĕс министрĕ Нокс пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтерĕ тăрăх, Уилки кашни уйăхрах Англие Америкăран 5—10 эсминец пама сĕннĕ пирки пичет представителĕсем панă ыйтусене ответлесе, США-н тинĕс министрĕ Нокс: Америка тинĕсçар флочĕ эсминецсене унтан ытларах пама пултараймасть, тесе пĕлтернĕ. Нокс малашне Америка флочĕн составĕнчен карапсем парассине хирĕç калана.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Уилки пичет представителĕсене: эпĕ Нокс каланинчен тĕлĕнтĕм, тесе пĕлтернĕ. Уилки калана тăрăх, февралĕн 11-мĕшĕнче «пысăк выранти представитель» ăна çапла пĕлтернĕ пулать: США Англие татах эсминецсем хушса пама пултарать, çакăншăн США оборонине сиен пулмасть.

Кунпа пĕрлех тата февралĕн 11-мĕшĕнче каçхине Уилки Рузвельтпа калаçни çинчен пĕлтереççĕ.

Франции икĕ зона хушшинче продовольстви уláштарса илни

БОРДО, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Офи (Гавас) агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франции снабжени статс-секретариачĕ, оккупаци влаçĕсемпе килĕшсе, Франции икĕ зона хушшинче таварсем уláштарса илмелли план туса хатĕрленĕ. Уláштарма тивĕçлĕ таварсен хисепне кашни зонăн ресурсĕсене тата ыйтăвĕсене шута илсе тунă. Çаксене пĕр-пĕринпе уláштарса илме пултараççĕ: выльăх-чĕрлĕх, аш-какай, ялхуçалăх продукчĕсем, сахăр, эрех, тырпул, рис, пахча-çимĕссем, çĕрулми, консервăсем, пулă тата фруктсем. Февралĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа икĕ зонине те продовольстви таварĕсене, 50 килограмран пуçласа 1000 килограмма çити, турттарса пыма ирĕк панă.

ЛОÇ ФЕРМИ

1937 çулта Серпухов хули çывăхĕнче (Мускав облаçĕ) лоç ĕрчетекен опытлă ферма тунă. Кун пек ферма урăх çĕрте тĕнчипе те çук. Ферма çывăхĕнче лоçсене курăк çитермелли вырăн картласа тунă. Унăн карти чылай çӳллĕ, мĕншĕн тесен лоç лутра картасем урлă питĕ час сиксе каçма пултарать. Фермăра халĕ лоçсен хисепĕ çирĕм пуçа яхăн. Вĕсене пăхакан кĕтӳçе те пур. Кĕтӳç вĕсене пăхать, кирлĕ чухне вăл хăйĕн пăхăр рожокĕпе сасă кăларать те вара лоçсем пурте ун патне пухăнаççĕ.

Вăрманта лоçсем ăвăс, хурăн, хăва, пилеш тата ытти çулçăллă йывăççен çулçисене çисе пурăнаççĕ. Хăш чухне кăçал çитĕннĕ çамрăк туратсене те пĕтĕмпех çисе яраççĕ. Хыр, чăрăш вăрманĕсенче лоçсем хырпа чăрăшăн çамрăк турачĕсене, хыр йĕкелĕсене çиеççĕ. Вăрманти выльăх çимен ытти курăксене те лоçсем питех лайăх çиеççĕ. Шурлăхлă вырăнсенче лоçсем шурлăхри ӳсентăрансене; хăмăша, хăяха, мăка çиеççĕ; тĕрлĕ шурлăхри ӳсентăрансен тымарĕсене чавса кăларса çиме пултараççĕ. Лоç типĕ çĕрте ӳсекен курăксене юратмасть, уйра ӳсекен тырра питĕ сайра-хутра анчах тивет. Çапла лоç ытти выльăх çимен курăксене çиет. Çак енчен пăхсан, вăл питĕ усăллă выльăх пулса тăрать, мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра çаван йышши курăксем ахалех, усă намасăрах пĕтеççĕ. Çапла сулла лоçа пăхса усрас тĕлĕшпе нимĕнле расход та тухмасть, ăна хĕлле кăна килте хатĕрленĕ апатпа усрамалла пулать. Хĕлле валли тĕрлĕ йывăççен вĕтĕ турачĕсене хатĕрлесе хураççĕ, йĕкел пустараççĕ, утă та хатĕрлеççĕ.

Ферма çывăхĕнче лоçедром текен вырăн тунă. Çак лоçедром çинче лоçсене кӳлсе çунасене тата ытти япаласене турттарса çӳреме вĕрентеççĕ, хăнăхтараççĕ. Халĕ унта çитĕннĕ лоçсене пурне те кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ. Вĕсене кӳлсе тĕрлĕ çапăсем, вутă, пĕренесем турттарса çӳреççĕ.

Лоç ферминче наукăллă опытсем тăвакан ученăйсем те пур. Вĕсем лоçсенĕн хытă чупакан рысаксем, йывăр япаласене турттарма юрăхлă выльăхсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Ученăйсем лоçсен ĕне пекех сĕтлĕ выльăх та тума май килнине пĕлтереççĕ. Лоç фермин çитĕнĕвĕсене Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кашни çулах кăтартса пыраççĕ.

Лоç Çĕпĕрти пысăк вăрмансенче, тайгара пурăнакан, питĕ нумай усă пама пултаракан выльăх. Тайгара лаша усрама хĕн, ун валли кунта лайăх курăк çителĕклĕ мар. Лоç тайгара ӳсекен курăксене пурне те çиет, курăк пулмасан тĕрлĕ йывăççен турачĕсемпе те питĕ аван пурăнать.

Халиччен лоç ирĕкре пурăнакан чĕрлĕх пулнă, ăна малашне килте, ялхуçалăхне усă пама пултаракан выльăх тăвас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Лоç—пысăк выльăх. Унăн какайĕ ĕне какайĕнчен пĕртте кая мар. Çакăн пирки лоссене охотниксем таксанах тытма пуçланă. Çапла вара лоçсен хисепĕ сулран çулах чакса пынă. Ĕлĕкхи вăхăтра пур вăрмансенче те тĕл пулакан лоçсем хальхи вăхăтра этем пырайман шурлăхсенче анчах тăрса юлнă. Çакăн пек шурлăхсенче ытти чĕрлĕхсем пурăнаймаççĕ, вĕсем кунта пулта пултараççĕ. Лоç лачакасенче, шурлăхсенче путмасть, вăл кунта пит аван утса çӳреме пултарать.

Лоçсен хисепĕ сахалланса пырать, вĕсем пĕтĕмпех пĕтсе ларма пултараçĕ. Çавăнпа Совет правительстви сахалланса пыракан ирĕкри чĕрлĕхсене сыхласси çинчен 1922 çулта декрет кăларнă, унта лоçсене те асăннă. Çак декрет хушнă тăрăх лоçсене вĕлерме юрамасть. Декрет хыççăн охотниксем лоçсене тытма пăрахнă та, вара вĕсем хуллен йышланса пыма пуçланă. Çакăн хыççăнах, лоç хуçалăха пысăк усă пама пултарнине кура, ăна килте пурăнма иллентерес тĕлĕшрен ĕçлеме тытăннă.

Лоçсене ĕлĕкех иллентерме пуçлани çинчен те тĕрлĕ хыпарсем пур. Мускав патшисен алла иллентернĕ лоçсем пулнă, анчах вĕсемпе нимĕнле усă курма та пĕлмен. Швецире пĕр вăхăтра лоçсене çуна кӳлсе çӳреттерме тытăннă пулнă. Анчах попсем ирĕкри чĕрлĕхе этеме иллентерсе ĕçлеттерме юрамасть тесе çак усăллă ĕçе пăрахтарнă. Çамрăк чухне тытса килте ӳстериĕ лоç çури этеме часах илленет, вăл çамрăк тиха пекех йăваш, хăйне пăхакан этеме юратаканскер пулать.

Ф. К.

Швеци правительстви делегацийĕ Мускава килсе çитнĕ

Февралĕн 13-мĕшĕнче Швеци Правительстви Делегацийĕ—Литва, Латви тата Эстони СС Республикисенчи пурлăх тĕлĕшĕнчи претензисене йĕркелесе ярасси çинчен калаçусем ирттерме Совет Союзĕпе Швеци хушшинче тунă Хутăшлă Комиссири Делегаци — Мускава килсе çитнĕ.

Делегаци составĕнче: Швеци Правительствин Уполномоченнăйĕсем — ютсĕршыв ĕçĕсен министерствин правовăй отделĕн директорĕ г-н Энгцелль, банк директорĕ г-н Бровальд, çаван пекех делегаци экспертчĕсем г-н Бергенсуроле тата г-н Фрик.

Ленинградски вокзалта делегацине саксем кĕтсе илнĕ: Совет Союзĕпе Швецин Хутăшлă Комиссийĕнчи Совет Правительстви Делегацийĕн Председателĕ, Наркоминделăн правовăй отделĕн заведующийĕ А. П. Павлов юлташ, Наркоминделăн протокольнăй отдел заведующийĕн заместителĕ Ф. Ф. Молочков юлташ, Совет Правительстви Делегацийĕн секретарĕ С. Т. Базаров юлташ, çаван пекех Чрезвычайнăй Посланник тата Полномочнăй Министр г-н Ассарсонпа пĕрле Швецин Мускаври миссийĕн чиновникĕсем.

Англин çар миссийĕ Турцире

ЛОНДОН, февралĕн 12-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентствин корреспонденчĕ Анкараран çапла пĕлтерет: Англи çар миссийĕн членĕ генерал-лейтенант Маршалл Корнуолл тата авиаци вице-маршалĕ Элмхерст Турци войскисене, Фракири, Дарданелри тата Смирнăри фортификацисене пырса курнă. Пĕлтерӳре калана тăрăх, Англи çар миссийĕн членĕсем çывăх вăхăтрах Канра гаврăнаççĕ.

Муссолинипе Франко тĕл пулни

РИМ, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС). Стефани агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Муссолинипе Франко хушшинче каласусем пулса иртнĕ. Бордигерта (Италире, Франципе юнашар чикĕре) февралĕн 12-мĕшĕнче ирхине тата кăнтăрла пуллă каласусем вăхăтĕнче «çак вăхăтра икĕ çĕршыва интереслентерекен Европăри проблемăсем çине Итали правительствипе Испани правительстви пĕр пек пăхнине палăртнă».

Японин çар карапĕсем Сиама заливне пырса çитнĕ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 13-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин пиллĕк çар карапĕ Сиама заливне пырса çитнĕ, вĕсем Таи территоричи шывсене кĕнĕ.

ЮТСĔРШЫВСЕНЧЕ

▲ Англин суту-илӳ министерстви çапла пĕлтернĕ: çывăхри çурçулта Англине турттарса килекен тĕрлĕ таварсен хисепĕ чылаях чакать: çĕрмакĕне пурçăн хисепĕ — 20 процента çити, искусственнăй пурçăн хисепĕ — 40 процента çити (вăрçă пуçланиччен кӳрсе килнипе танлаштарсан).

▲ Бернра (Швейцария) пичетлесе кăларнă декрет тăрăх, правительство ялхуçалăх рабочийĕсене ялтан тухса каймашкăн чарма пултарать. Правительствăн ĕçĕр çынсене ялхуçалăх ĕçне яма, пысăк выран йышăнса таман промышленноçлă предприятисенчен ялхуçалăх ĕçне куçарса пыма право пулать.

Сульфидин

Питĕ лайăх эмел

Медицина енĕпе ĕçлекенсем тахçантанпах пневмококксемпе, ӳпкене шыçăнтаракан бактерисемпе кĕрешмелли майсем шыранă. 1938 çулта çак бактерипе кĕрешме юрăхлă эмеле Англире тупнă. Çав çулах çав чиртен сыватмалли эмеле пирĕн Совет çĕршывĕнче те тупнă. Ăна сульфидин тесе ят панă. Мускавра ăш чирĕпе чирленисене сыватакан клиника профессорĕ О. М. Гельштейн чирлисене çав эмеле пирвайхи хут парса сыватса пăхнă. Темиçе кун хушши температури 40 градусран чакман çынна, ним пĕлми аташса выртаканскерне, вăл сульфидин порошокне панă. Талăкра ăна 6 грамм панă. Чирлĕ çыннăн тепĕр кунне температура ана пуçланă, сывă çынăнни пекех пулса тăнă. Тата 7 кунран çав çын сывалса тухнă. Çак больницăра ӳпке чирĕпе выртакансенчен вăтамран илсессĕн 100 çынран 17-шĕ (17 проц.) вилсе пынă. Ку эмеле пама пуçланăранпа ку процент ытах чакнă. Больницăра çав малтан сыватнă çын хыççăн сульфидинна эмелленнĕ 200 çынран 3-шĕ çеç вилнĕ.

1939 çулта тепĕр тухтăр менингитпа чирленĕ çынсене сульфидинпа эмеллеме тытăннă. Менингит вăл пуç мими чирĕ. Унпа чирленисем нумайĕшĕ вилеççĕ, е ĕмĕрлĕхех сусăрланса юлаççĕ: суккăр, хăлхасăр пулаççĕ. Ку тарниччен менингитпа чирленĕ çынна памалли эмелсем пулман. Сульфидин çав чирпе чирленисене сиплеме аван эмел иккенне палăртнă. Ытти больницăсем те унпа питĕ ăнăçлăн усă курма пуçланă.

Юн пăсăлни (зараженне крови) тата гонорреа (триппер) чирĕпе чирленисене те çак сульфидинпа эмеллеççĕ. Халĕ Мускавра икĕ пысăк заводра сульфидин туса хатĕрлеççĕ. 1940 çулта ăна тонна ытла туса кăларнă, каçал 15 тонна сульфидин тăваççĕ.

Комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кроссĕ

Кросс ăнăçлăн иртсе пырать

КУСЛАВККА. (Хамăр корр.) Кунтăçак юлашки эрне хушшинче уйăхрти йĕлтĕрсем çине тăрса, противогазсем тăхăнса çӳрекен çамрăксене час-часах чыпăн курма пулать. Вĕсем — йĕлтĕрлĕ кросс участникĕсем. Кроса хатĕрленнĕ вăхăтра кăна районра 277 комсомолец ГТО комплексĕн йĕлтĕр нормине панă.

Паянхи куна кроса 419 комсомолец хутшăннă. Февралĕн 9-мĕшĕнче район центрĕнче кросс пулса иртнĕ. Унта 212 комсомолец хутшăннă, вĕсенчен 165 комсомолец ГТО нормине панă.

Кросра ФЗО шкулĕнчи Иванов комсомолец ертсе пынă команда-пятерка паха тĕслĕх кăтартнă, вăл команда 10 километра 43—46 минута хушшинче тухнă. Çаван пекех колхозсенчи комсомолецсем те кроса аван хутшăнаççĕ. Аманикри «Динамо» колхозра кроса 33 çын хутшăннă, вĕсенчен 29-шĕ ГТО нормине панă.

Çаксемпе пĕрлех, кроса начар хутшăнакан организацисене те асăнса хăвармалла. Комбинатри 80 комсомолецран 13 комсомолец çеç кроса хутшăннă. Райсоюз, халăх сучĕ сумĕнчи комсомол организацисем те ку тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Спорт обществисен тата ВЛКСМ райкомĕн оборонăпа физкультура ĕçĕсен комиссийĕн кроса ирттерес ĕçне лайăхрах ертсе пымалла.

Кроса 170 çын хутшăннă

ÇЕМЕРЛЕ. ФЗО шкулĕнче вĕренекенсем комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кроснелайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Кунта кросс февралĕн 9-мĕшпе 10-мĕш кунĕсенче пулса иртрĕ. Кросра 170 çын ытла пулчĕç, вĕсенчен нумайĕшĕ ГТО значокĕн нормисене пачĕç.

Я. АЛЯКИН.

Хĕрлĕ Çар кунĕ умĕн

КАЛИНИНО. Уйкас Юнтапари вăтам шкулта Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă куна ирттерме хатĕрленеççĕ. Çавна май унта физкультурăпа оборона ĕçне чылай лайăхлатнă.

Шкулта ПВХО значокĕн нормисене 30 çын, ГСО значокĕн нормисене 31 çын пачĕç. Драмкружок спектакль лартса пама хатĕрленет.

С. ИЛЬИН.

ОКТЯБРЬСКОЕ. Шĕнерпуç, Кудемер тата Иккĕмĕш Чураш ялсовечĕсенчи допризывниксем 120 сехетлĕ программа тăрăх çар ĕçне вĕренеççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне ПВХО, ГСО значокĕсен нормисене пама хатĕрленеççĕ.

Ф. ПЕТРОВ.

„Нарспи" пьесăна лартма хатĕрленеççĕ

Февралĕн 13-мĕшĕнче Чăвашсен Государство Академи Театрĕнчи артистсем ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Я. Павлов юлташ патĕнче пулса, «Нарспи» спектакле лартма хатĕрленес ĕç мĕнле пынине çинчен каласа пачĕç. Унта пьеса авторĕ Кăлăн, пьесăна лартакаки Родионов, спектакльте выляканартистсем: Трофимова, Ургалкин, Медиков, Тимофеева, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ Молодов юлтăпсем пулчĕç. Вĕсем «Нарспи» пьесăри уйăрăм рольсене выляма хатĕрленни çинчен каласа пачĕç.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Павлов юлташ «Нарспи» пьесăна лартма хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеме лайăх кăтартусем панă.

Автомашинăпа çӳреме вĕренеççĕ

ÇЕРПУ. Пăваркассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем автомашинăпа çӳреме вĕренме тытăнчĕç. Автокружокра 20 çын вĕренеççĕ.

Кружока колхозри шофер Алексеев юлтан ертсе пырать. Пурĕ 4 занятисенче вĕренеççĕ. Занятисенче вĕренеççĕ практикăллă ĕçпе сыхăнтарса пыраççĕ.

Д. КИРИЛЛОВ.

Карело-Финн СС Республикине пурăнма куçрĕç

КУКЕÇ. Иккасси ялсоветне кĕрекен «1-ое Мая» колхозри колхозниксем пурĕ 12 хуçалăх Карело-Финн СС Республикине пурăнма куçрĕç.

Г. ПРОКОПЬЕВ.

СУД

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре чăрмантаракансем

Хирпуçĕнчи «Çĕнтерӳ» колхозра (Вăрнар р.) лашасене тата çамрăк выльăхсене питех те япăх пăхнă. Конюхсем лашасене çитермелли тырпулсене вăрласа пурăннă. Вĕсен ĕçне колхоз председательĕ те, бригадирсем те тĕрĕслесе тăман.

Лашасене пăхассишĕн никам та ответлă пулман пирки колхозра иртнĕ çулта 23 лаша тата 15 тиха вилнĕ.

Лашасене начар пăхса вĕлернĕшĕн, ку ĕçре ответсăр пулнăшăн, лашасене çитермелли тырпулсене, колхоз укçине çаратнăшăн халăх сучĕ колхоз председательĕ пулса ĕçленĕ П. В. Плотникова 3 çулăха, бригадир Т. Никифорова 4 çулăха, конюхсене: И. Н. Наянова—4 çулăха, Ф. В. Васильевна В. Т. Терентьева—2-шер çулăха тĕрмене хупмалла туна.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономикă пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—[illegible] издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

ИТ 2273.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 146. Ф. Б. 58×84 п. л.